1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

70 /26476/ № Кĕçнерни кун, 2014, ака (апрель), 17 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Информаци кунĕнчи тĕл пулусем

Ĕнер республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртнĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Лапсар поселокĕнчи социаллă пĕлтерĕшлĕ объектсенче пулнă.

Михаил Васильевич икĕ урамри нумай хваттерлĕ 19 çурта пăхса тăракан «Лапсарская» УК» ООО ĕç-хĕлĕпе паллашнă. Организаци ертӳçисене вăл управляющи компанин ресурссемпе тивĕçтеркен организацисен уменчи парăмĕ ӳссе пыни çинчен асăрхаттарнă – унăн виçи çулталăк пуçламăшĕ тĕлне 11 млн тенкĕрен иртнĕ, çынсен ыйтăвĕсене вăхăтра татса памалли пирки аса илтернĕ, тӳлевсене вăхăтра хывманнисем тĕлĕшпе йышăнакан мерăсен уссипе кăсăкланнă.

«Шупашкарта пурăнакан кашни 4-мĕш çын ЖКХри пулăшу ĕçĕсемшĕн субсиди илет. Вĕсем коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн вăхăтра тӳленине пĕлмелли база кирлĕ. Тухăçлă ĕçлени – хăвăршăнах: тăрăшмарăр тăк – çука юлатăр», – тенĕ республика Пуçлăхĕ муниципалитет влаçĕсене управляющи компанисемпе тачă çыхăну тытса ĕçлеме чĕнсе каланă май.

Поселокра пурăнакансен ыйтăвĕсемпе сĕнĕвĕсене итленĕ хыççăн Михаил Игнатьев Совхоз урамĕнчи 2/2 çуртпа, граждансене юхăннă çурт-йĕртен куçармалли 2017 çулхи программăна кĕртнĕскерпе, çыхăннă лару-тăрăва тĕплĕ тишкерме хушнă – çынсене унтан маларах куçарма тăрăшмалла. Çавăн пекех кĕркунне-ччен çутă çителĕксĕр картишсенче хунарсем çакас ыйтăва та таса памалла. «Чăваш Ен çыннисен хăш территорире пурăннине пăхмасăр паха коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе усă курмалла», – пĕтĕмлетнĕ Михаил Васильевич.

«Хулан тĕп больници» бюджет учрежденийĕн подразделенийĕнче вăл медицина ĕçченĕсен шалăвĕн ӳсĕмĕпе, пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕпе, эмелсемпе мĕнлерех тивĕçтернипе интересленнĕ. Поликлиникăн тĕп врачĕ Ирина Ефимова электрон регистратурин ĕçĕпе паллаштарнă, электрон медицина карттине ĕçе кĕртни çинчен каласа панă. Вăл пулăшнипе чирсен 10 пин ытла электрон историне хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Михаил Игнатьев паллиативлă медицина пулăшăвĕн çулталăк каялла уçнă уйрăмĕнче пулнă, пациентсемпе каласнă.

Унтан республика Пуçлăхĕ пуçламăш шкула-ача садне çитнĕ. Кунти апат-çимĕç блокне юсама, çуртăн 1-мĕш хутне реконструкцилеме палăртнă. Шкулченкси икĕ ушкăн уçăлĕ, çакăн хыççăн поселокра ача сачĕн черечĕ текех пулмĕ.

Михаил Игнатьев ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче те пулнă, кунти 1991 çулта тунă бассейн юсавĕпе çыхăннă ĕççене хăвăртрах вĕçлемеллине палăртнă. Çавăн пекех вăл пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 42-мĕш вăтам шкул ĕçĕхĕлĕпе те паллашнă. Çак вĕренӳ çулĕнче унта 292 ача пĕлӳ илет – шкулăн проектпа пăхнă хăвачĕн 39% яхăн. Апат-çимĕç блокĕн оборудованине çĕнетнĕ те – ачасене апатлантарас енĕпе чăрмав çук. Эльвира Анисимова директор палăртнă тăрăх – шкулта ачасене тĕрлĕ енлĕн аталантармашкăн мĕн пур услови пур, çавна май экзаменсен кăтартăвĕсем те хулари вăтам шайран пысăкрах.

Информаци кунĕн программипе килĕшӳллĕн Михаил Игнатьев тата Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов поселок активĕпе курнăçнă, тĕл пулура поселок аталанăвĕн малашлăхĕ çинчен каласа панă, кунта пурăнакансен ыйтăвĕсене хуравланă.

■ **К.ПОТАПОВ**

СДАЕМ В АРЕНДУ

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

Со всеми вопросами обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.

Ял хуçалăхĕ

Патăрьелсемпе Пăрачкавсем тырă акаççĕ

Çанталăка сăнакансем кăçал çулла шăрăх пуласса асăрхаттарнине çĕр ĕçченĕсем самантлăха та манмаççĕ. Çурхи кун çулталăк тăрантарнине асра тытса çĕр пичĕ кушăхсанах хире техника кăлараççĕ.

Республикăн çурçĕр енчи хăш-пĕр район уй-хирĕнче халĕ те тĕл-тĕл юр выртать пулин те, кăнтăр енче вăл кайса пĕтнĕ, лаптăксем çилпе, хĕвелпе хăвăрт типеççĕ.

Ака уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне Пăрачкав районĕнчи «Никулинский» ЯХПКра Дмитрий Волков тата Александр Быков механизаторсем 45 гектар çинче урпа акнă. Хуçалăхăн кăçал 490 гектар çинче çур аки тумалла. Ăна вăхăтра пурнăçлама майсем çителĕклĕ. Техника та йăлтах юсавлă, сорта çĕнетме 20 тонна элита вăрлăх туяннă.

Патăрьелсем те вĕсенчен юласшăн мар, хальлĕхе 10 гектар çинче урпа акнă.

Елчĕксен кăтартăвĕ те савăнтарать. Хĕл каçнă культурăсемпе çĕр улми пулнă пусса минерал удобренийĕ сапнă. Вăл 5398 гектарпа е 93 процентпа танлашать. «Рассвет», «Колос», «Комбайн» ЯХПКсем, «Победа», «Клевер», «Нива», «АСК-Ялычики» ОООсем тата «Прогресс» АХО нумай çул ӳсекен курăксемпе кĕрхисене апатлантарса пĕтернĕ.

«Комбайн» ял хуçалăх кооперативĕ хирте нӳрĕк тытма пуçланă. Леонид Сусметов механизатор кĕрхи çĕртме пуссинче 28 гектар сӳреленĕ. Хуçалăх кăçал ака-суха лаптăкĕсене 2883 гектара çитернĕ, пĕлтĕрхинчен 14% пысăклатнă. Машина-трактор паркне çĕнетес тĕллевпе 16,3 млн тенкĕлĕх техника туяннă.

Муркаш районĕнчи «Оринино» кооператив ертӳçи Юрий Шишокин ĕçлекенсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшать. Нарăсра вăл ĕç укçине 16% ӳстернĕ, акара 20% премипе хавхалантарать. Отпуск çумне пĕр шалу чухлĕ укçа хушать. Кунта кадр ыйтăвне татса панă, механизаторсем çителĕклĕ.

16 районта вăрлăха имçамлаççĕ. Республикăра 3150 тонна хатĕр ĕнтĕ, вăл пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 6,5 хут нумайрах.

Çĕр улми яровизацилеме 13 район хутшăнать, çутă çĕре 9947 тонна вăрлăх кăларнă /2013 çулта – 2830/.

Кăтартусем пур енĕпе те пĕлтĕрхинчен лайăхрах пулин те /çакă çуркунне иртерех килнипе çыхăннă/, ĕç хăвăртлăхне чакарма, лăпланма юрамасть. Çанталăк ăшăтса пынă май çĕр хăвăрт пиçсе-пулса çитет. Механизаторсен хире тухма хатĕр пулмалла.

■ **В.ГРИГОРЬЕВ**

Республикăри районсенче çур акине епле хатĕрленнине тата уй-хир ĕçĕсем епле пынине кăтартни /ЧР Ял хуçалăх министерствин кăтартăвĕсем тăрăх, 2014 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне/

Районсем	Паха вăрлăх		Минерал удобренийĕ		Кĕрхисене апатлантарнă	
	тонна	%	тонна	%	гектар	%
Çĕрпӳ	3769	99	553,4	47,9	1000	22
Елчĕк	3640	96	1111,3	79,8	3805	66,7
Вăрнар	2611	96	1088,1	84,1	3765	82,8
Етĕрне	2072	95	452,2	40,5	804	18,3
Вăрмар	2380	94	277,9	25,6	932	38,6
Канаш	2168	91	230	24,2	687	16
Красноармейски	1854	91	408,4	48	1754	56,2
Шупашкар	2059	89	577,9	62,4	1027	34,2
Шăмăршă	1857	89	171,9	23,3	750	28,8
Çĕмĕрле	501	89	104	44,9	760	59,6
Тăвай	2259	88	175,7	20,8	404	14,4
Элĕк	1571	88	244,6	29,2	225	9,7
Комсомольски	2667	86	800,1	61,5	2400	52,4
Йĕпреç	1466	86	329,3	42,9	899	29,6
Патăрьел	3351	85	673,7	41,1	1474	32,5
Сĕнтĕрвăрри	1021	85	271,5	50,7	140	6,7
Хĕрлĕ Чутай	660	85	202,4	43,3	–	–
Пăрачкав	2131	82	419,2	38,1	1960	34,9
Куславкка	1819	81	499,7	61,9	96	3,3
Улатăр	1496	77	195,4	23	1420	75,1
Муркаш	2194	74	227,6	20,4	150	3,1
Республикипе	43546	88	9014,3	45,1	24452	33,9

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче кăларнă указĕпе килĕшӳллĕн вырăнти хăй тытăмлăха аталантарас енĕпе тунă пархатарлă ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар районĕнчи Тутаркасси ял тăрăхĕн пуçлăхне **Алексей Александрович ЕЛИМОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

сывлăх сыхлавĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Шупашкар районĕн больници» бюджет учрежденийĕн врач-наркологне **Василий Николаевич ЕГОРОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВРАЧĔ»** хисеплĕ ят панă;

ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Елчĕк районĕнчи «Прогресс» акционерсен хупă обществин механизаторне **Владимир Петрович МИСЯКОВА,** Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Коминтерн» ял хуçалăх производство кооперативĕн механизаторне **Илья Николаевич ПОНОМАРЕВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ МЕХАНИЗАТОРĔ»** хисеплĕ ят панă;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Çĕмĕрле хулинчи «Автомобиль фургонĕсен комбиначĕ» акционерсен уçă обществин пай пуçлăхне **Виктор Николаевич МАГУЛИНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Вăрнар поселокĕнчи «Газпром газ валеçесси Шупашкар» акционерсен уçă обществин филиалĕн директорне, Элĕк район пуçлăхне – Элĕк районĕн Депутатсен пухăвĕн председательне **Владислав Харитонович ДУБИНИНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХĂН ЙĂЛА ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТИВĔÇТЕРЕС ĔÇЁН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

физкультурăпа спорт енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикинчи Куславкка районĕнчи муниципалитетăн ачасене хушма пĕлӳ паракан «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – физкультурăпа сывлăха çирĕплетекен «Атăл» комплекс» автономи учрежденийĕн хушма пĕлӳ паракан тренер-преподавательне **Валерий Иванович КОНЮКОВА,** Чăваш Республикинчи «Хоккей ветеранĕсем» общество организацийĕн председательне **Анатолий Иванович МИХАЙЛОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ФИЗКУЛЬТУРĂПА СПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă.

Шухăш

«Сарă прессăн» пушă кĕлтисем

Федерацин массăллă информаци хатĕрĕсен регионти хăш-пĕр кăларăмĕн журналисчĕсем юлашки вăхăтра Чăваш Республикин ял хуçалăхĕнчи лару-тăрăвне çине тăрсах шĕкĕлчеме пикенчĕç. Материалсемпе паллашнă май вĕсен «професси ăсталăхĕнчен» чăннипех тĕлĕнетĕн: статистика органĕсен типĕ кăтартăвĕсене тĕпе хурса, ыйтăва тĕплĕн тишкермесĕр, чăнлăхпа килĕшсе тăман тата пĕр енлĕ те тĕрĕс мар хыпарпа вулаканăн пуçне минретме васкаççĕ. Кун пек чухне хăйсем çирĕплетнĕ тăрăх – производство ĕçĕ-хĕлĕпе пачах çыхăнман экспертсемпе аналитиксенчен комментари илме те именеççĕ.

Пӳлĕмрен тухмасăр çырнă хайлавсенче унашкаллисем республикăн унченхи Президенчĕ ячĕпе мухтав юрри ĕнĕрлени сисĕнет. Сăмах май, çав кăларăмсемех паян ырлакан ертӳçĕ Правительствине иртнĕ саманара самаях хурлатчĕç. Статьясен шăнăрĕ те чăннипех тĕлĕнтерет: Чăваш Енре пĕтĕмпех начар иккен...

«Авăнĕ анлă, кĕлти пушă» тенĕ ваттисем. «Сарă пресса» журналисчĕсем ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе материал хатĕрленĕ чухне çапла пулса тухать те: анлă авăнра та вĕсем пушă кĕлте пухма пикенеççĕ. Кĕскен – хăмăл çийĕн кăна шăйăрттараççĕ тата типпĕн çыраççĕ. Тен, вулакансен хушшинче мана хирĕçлес текен тупăнĕ, çавна май шухăшăма хăш-пĕр тĕслĕхпе çирĕплетесшĕн.

Информацин çӳлерех асăннă хатĕрĕсен ĕнентерĕвĕ тăрăх – агропромышленноç комплексне федераци центрĕ патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтересси ӳссе пынине пăхмасăр Чăваш Ен дотаци уйăрассине çуллен чакарать имĕш. «Мускав пире пулăшас тĕллевлĕ, Чăваш Республикин Правительстви вара мĕншĕн хирĕçлет?» тесшĕн-и вĕсем? Чăн та, малтанласа ĕнентерӳллĕ илтĕнет. Çав вăхăтрах цифрăсем пач урăххине çирĕплетеççĕ. Вăрттăнлăх мар – патшалăх пулăшăвĕн енĕсене çулленех тӳрлетсе улăштараççĕ. Кирлĕ тĕк палăртнă суммăна çав пулăшăвăн приоритетлă ытти çул-йĕрĕ валли валеçеççĕ. Анчах çакă палăртнă дотацисен виçине чакарнине пĕлтермест. *Пĕлтĕр АПКна пулăшма республика бюджетĕнчен уйăракан сумма 2009 çулхинчен 1,7 хут ӳснĕ, 892,6 млн тенке çитнĕ.* Ял хуçалăхне хывнă кредит укçи-тенки те нумайланнă. Çавăнпа пĕрлех бюджет хатĕрĕсемпе пирĕн республикăра федерацин Атăлçи округĕн регионĕсенчен эффективлăрах усă кураççĕ. Тĕслĕхрен: 2013 çулта бюджет уйăрнă 1 тенкĕ пуçне Чăваш Енри аграрисем 14,5 тенкĕлĕх продукци илнĕ /2009 çулхинчен 3 тенкĕ нумайрах/, Пермь крайĕнче – 13,6, Мордва Республикинче – 9,75, Киров облаçĕнче – 7,37 тенкĕлĕх. 100 гектар çĕр пуçне продукци хатĕрлессипе /3689 пин тенкĕ/ пирĕн республика пĕлтĕр федерацин Атăлçи округĕн регионĕсен хушшинче виççĕмĕш вырăна тухнă.

2013 çулта ял хуçалăх çимĕçне 35,6 млрд тенкĕлĕх туса илнĕ е 2009 çулхинчен 11,6 млрд тенкĕлĕх ытларах.

Пытармăпăр: асăннă тытăмра татса паман ыйту хальлĕхе çук мар: аграрисен пĕлтĕрхи тĕллевсене пурнăçлама май килмерĕ – 2010 тата 2013 çулсенчи типĕ çанталăк чăрмантарчĕ. Туса кăларнă продукци индексĕ 89,3 процентпа танлашнă. Апла пулин те 2009 çулхи шайпа танлаштарсан асăннă кăтарту 100 процента сывхарать. Саратов, Эрĕнпур, Киров облаçĕсем, Пушкăрт, Тутар республикисем 2009 çулхи шая çĕкленеймерĕç. «Сарă пресса» ырă тĕслĕх вырăнне Мари Республикине асăнать: унта 2013 çулхи кăтартупа пĕтĕмĕшле виçе индексĕ /ИФО/ 110 процентпа танлашнă. Çут çанталăкпа климатăн пĕрешкел условийĕнче кӳршĕсем Чăваш Ен аграрийĕсенчен лайăхрах ĕçленĕ имĕш. Ман шухăшпа – танлаштарни кун пек чухне вырăнсăр. Тĕслĕхшĕн ӳсентăран продукцийĕпе çыхăннă темиçе цифрăна илер. 2013 çулта çĕршывра тĕш тырă 2009 çулхи шайăн – 94, федерацин Атăлçи округĕнче 78,1 процентĕ чухлĕ туса илнĕ. Ку енĕпе Чăваш Ен Мордва, Тутар, Мари Республикисене, Чул хула, Киров облаçĕсене, Пермь крайне кая хăварса çиччĕмĕш вырăна тухнă.

Пахча çимĕç туса илессипе ФАОра иккĕмĕш вырăн йышăннă /малта – Пермь крайĕ/, мăйракаллă шултра выльăх йышĕпе, çамарта туса илессипе тата ытти енĕпе те кӳршĕсем Чăваш Енрен каярах пыраççĕ. Апла тăк вĕсен пĕтĕмĕшле виçе индексĕ 110 процентпа епле танлашма пултарнă-ха? Кунта «Акашеври чăх-чĕп фабрикин» тӳпи сумлă иккен – юлашки çулсенче асăннă предприяти бройлер ашĕ туса илес енĕпе инвестицин пысăк проекчĕсене ĕçе кĕртнĕ. «Сарă пресса» вара кун пирки пĕр сăмах та асăнмасть, типĕ цифрăсене кăна тĕпе хурать тата регионпа ял хуçалăх министерствин ертӳлĕхĕсене тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемеççĕ, арифметикăна пĕлмеççĕ тесе айăплама пăхать. Шутлав тĕлĕшпе кама «иккĕ» паллăпа хакласси пирки тавлашмалăх пур: «калем ăстисем» тишкерме пĕлменни куç умĕнчех вĕт.

Ăна-кăна пăхмасăр Чăваш Енри хресченсем çур акине хатĕрленеççĕ, ял хуçалăх продукцине ытларах туса илсе халăха пахалăхлă апат-çимĕçпе тивĕçтерессишĕн тăрăшаççĕ.

■ **Сергей ЯКОВЛЕВ**

«Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ»: электрон çырăнтару

2014 çулăн II çурри валли *«Хыпара», «Çамрăксен хаçатне»* электрон мелпе çырăнса илме пулать.

Çур çуллăх хак:
«Хыпар» – 90 тенкĕ, «Çамрăксен хаçачĕ» – 50 тенкĕ.



Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра

Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, вырăн-вырăн çумăр çăвать. Çил анăçран çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 9 градус ăшă, çĕрле 1 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 753 мм, сывлăшри нӳрĕк 81 процент.

Кун тăршшĕ 14 сехет те 21 минут.

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил анăçран çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 11 градус ăшă, çĕрле 0 градус.** Атмосфера пусăмĕ 759 мм, сывлăшри нӳрĕк 41 процент.

Кун тăршшĕ 14 сехет те 25 минут.

Масмак ăсталаççĕ

Алă ĕçĕ тума пĕлни хĕрарăма яланах улемлетет. Юлашки вăхăтра ялсенче тĕрĕ тĕрлесси çĕнĕрен йăл илчĕ.

Паян этемлĕхĕн черчен çуррийĕ хăюпа, вĕтĕ шăрçапа картинăсем тĕрлеме кăмăллать. Вăрнар районĕнчи Чăрăшкас Хирлеп культура çурчĕн ĕçченĕсем вара вĕтĕ шăрçаран, шăрçаран, тимĕр укçаран, тĕрлĕ хăюран масмак ăсталаççĕ. Масмака ĕлĕк качча кайнă хĕрарăмсем çыхса çӳренĕ. Чăрăшкас Хирлепсем вара ăна « Юрлать тăван ялăм» смотр-конкурса хутшăннă чухне çыхĕç.

Р.ИВАНОВА.

Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрти искусство тавра

Çĕнĕ Шупашкарти ачасен искусство шкулĕнче Пĕтĕм Раççейри «Искусство. Вĕрентӳ. Çĕнĕлĕхсем» конференци иртнĕ. Унăн кăçалхи теми: «Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрти искусство тата педагогика».

Кăçал Интернет-конференцие ӳнер ăсталăхне вĕрентекенсем Раççейĕн сакăр регионĕнчен хутшăннă. Вĕсене Çĕнĕ Шупашкар хула пуçлăхĕ Олег Матвеев, хула администрацийĕн культура пайĕн пуçлăхĕ Владимир Макаров, химиксен хулинчи ачасен искусство шкулĕн директорĕ Ольга Петрова саламланă. Ларура çамрăк ăрăва ӳнер пĕлĕвне парас ыйтусене сӳтсе явнă, конкурса тăратнă ĕçсене пăхса тухса хакланă. Конкурса хутшăннă преподавательсем хăйсен ĕçхĕлĕпе, çĕнĕлĕхсемпе паллаштарнă. «Вĕренӳ тата меслет пособийĕ» номинацире – Татьяна Шаркова, «Вĕренӳ предмечĕсемпе – меслет ăсталăхĕ» номинацире – Елена Панарина, «Видео тата мультимедиа презентацийĕ» номинацире Ольга Сойвер, «Класс тулашĕнчи мероприяти» номинацире – Светлана Иванова, «Сайт тата блог» номинацире Ольга Горюнова пĕрремĕш вырăна тухнă. Çĕнтерӳçĕсемпе призерсене Дипломсемпе, Тав хучĕсемпе чысланă.

А.ГРОМОВА.

Виталий Золотов – район мухтавĕ

Элĕкри литературăпа тавра пĕлӳ музейĕнче паттăрлăх урокĕ иртнĕ. И.Я.Яковлев ячĕллĕ вăтам шкул вĕренекенĕсем Синер ялĕнче çуралса ӳснĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕпе, çар ăслăлăхĕсен кандидачĕпе Виталий Золотовпа тĕл пулнă.

40 çула яхăн тинĕс-çар флотĕнче службăра тăнă офицерăн ача-пăчана каласа кăтартмалли сахал мар. Морякран пуçласа 1 рангри капитана çитнĕскер тем те курнă, таçта та пулнă. Хĕрсемпе яшсем ентешне тимлĕн итленĕ, тĕрлĕ ыйтупа кăсăкланнă. Ачасемпе хăнасем Виталий Золотовăн 80 çулхи юбилейĕ тĕлне хатĕрленĕ куравпа паллашнă. Унта Золотовсен йăхне халлланă кĕнекесем, сăн ӳкерчĕксем, хаçат кăларăмĕсем вырăн тупнă, вĕсем пурте музейре упраççĕ. Тĕл пулура унăн «Мой жизненный путь длиною 80 лет и тысячи пройденных миль» çĕнĕ кĕнекине те пахаланă.

И.МИХЕЕВ.

Олеся Игнатьева – чи вăйли

Белгородра Олимп чемпионки Светлана Хоркина ячĕллĕ вĕренӳпе спорт комплексĕнче аслă вĕренӳ заведенийĕсен хушшинче армспорт енĕпе çĕр-шыв чемпионачĕ иртнĕ.

Ăмăртура 46 регионтан 160 ытла спортсмен тупăшнă, вĕсен йышĕнче çĕр-шыври чи паллă армреслерсем те пулнă. Чăваш Ен чысне унта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн команди (тренерĕ А.Атласкин) хӳтĕленĕ. 80 килограмлă хĕрсен ушкăнĕнче Çурçĕр Осетири тата Калининградри вăйлă спортсменсене парăнтарса чемпион ятне журналистика уйрăмĕн 4-мĕш курс студентки Олеся Игнатьева тивĕçнĕ. Армспорт енĕпе палăрнă пике пĕлтĕр те чемпионатра пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине хăпарнă. Тепĕр виçере Эльмира Алеева пулас юрист бронза медаль çĕнсе илнĕ. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе пирĕн ентешсем пиллĕкмĕш вырăн йышăннă.

А.МИХАЙЛОВ.

Пĕтĕмлетӳ

Республика парăмĕ чакать



Хамăр тупăшсем

Чăваш Ен патшалăх парăмне йĕркелес, ăна пĕчĕклетес тĕлĕшпе тухăçлă ĕçлет. Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне вăл 9 млрд та 827 млн тенкĕ, малтан палăртнинчен 935,4 млн тенкĕ /8,7%/ сахалрах, пулнă. Пĕлтĕр Чăваш Ен хăй тунă тупăшăн 48,2% чухлĕ /ку 2013 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлнехи кăтартуран 6,5% сахалрах/ шутланнă */таблицăна пăхăр/*. Федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче республикăн патшалăх параме налукран, налук шутланман çăл куçран пуçтарăннă тупăш калăпăшĕнче миçе процент йышăннине тишкерсе /округăн вăтам кăтартăвĕ 53,6% танлашнă/ пире тăваттăмĕш вырăн панă.

Патшалăх парăмĕ

Патшалăх парăмĕ 2010 çулта Чăваш Ен хăй кӳнĕ тупăшăн 69,9% чухлĕ пулнă. Ăна республика ĕçлесе илнĕ усламăн 48,2% таран чакарнине палăртмалла. Раççей Финанс министерстви регионсен иртнĕ икĕ çулхи парăмĕ епле улшăннине тишкерне, /4-шĕнче ӳснине, 8-шĕнче, вăл шутра Чăваш Енĕн, чакнине уçăмлатнă.

Раççейĕн пур регионĕ те рынок майĕсене тĕпе хурса парăм политикине тухăçлă пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Уйрăммăн илсен ку енĕпе пысăк пĕлтерĕшлĕ çул – патшалăх облигацийĕ. Пĕлтĕрхи çĕртме-утă уйăхĕсенче республикăн патшалăх облигацине пилĕк çула вун икĕ уйăхра 8,15-8,09% тупăш паракан ставкăпа пĕр млрд та 500 млн тенкĕлĕх эмисси тунă.

"Cbonds" информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх – 2013 çулта облигацисем вырнаçтарнă регионсен /Мускавсăр пуçне/ хушшинче Чăваш Республикин кăтартăвĕ – чи лайăххи. Ставка шайĕпе эпир – пĕрремĕш вырăнта.

ЧР Финанс министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Ен кăçал пысăк ставкăпа 2 млрд тенкĕлĕх облигаци вырнаçтарма палăртать. Республика облигацисем хывассипе пĕтĕм тĕнчери FitchRatings тата Moody'sInvestorsService рейтинг агентствисем хисепе кĕртнĕ ЧР кредит рейтингĕсен тӳпи пĕчĕк мар.

Чăваш Енĕн кредит историйĕ уçăмлă. Республика хăйĕн умĕнчи тивĕçе туллин тата вăхăтра пурнăçлать. Правительство парăм политикине яваплăха туйса, маларах тĕплĕн виçсе йĕркелет. Экономикăн улшăнса тăракан лару-тăрăвĕнче ку рейтинга çӳлте тытса тăма май парать.

FitchRatings агентство кăçалхи кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Ен рейтингĕсем "BB+" шайĕнче "çирĕп" прогноза тивĕçтернине палăртнă. Moody'sInvestorsService агентство ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче республикăн кредит рейтингĕсене пĕтĕм тĕнчери виçепе, ют çĕр-шыв укçипе пахаласа Ba2 шайĕнче тата наци виçипе хакласа Aa2.ru шайĕнче "çирĕп" тăнине çирĕплетнĕ. Республика кредит нумай илсен те ăна вăхăтра тавăрма пултарнине, Чăваш Ен инвестици хывмалли ăнăçлă регион пулнине пĕлтерет çакă.

Республикăн социаллă пурнăçĕпе экономики еплерех аталаннине çĕр-шыв ертӳлĕхĕ çеç мар, укçа-тенкĕпе çыхăннă тĕрлĕ организаци те сăнать. Çавнашкал тытăма ертсе пыракан çынсенчен пĕри – "АКБ "РОСБАНК" АУО парăм капиталĕн рынокĕн департаменчĕн директорĕ Антон Валентинович Кирюхин.

Антон Валентинович парăм политикин вăрттăнлăхĕсене çынран илтнĕ хыççăн алла илмен. Вăл пирĕн республика пирки акă мĕн каланă: "Паян, Раççей субъекчĕсем парăм ӳссе пынипе палăрса тăнă чух, Чăваш Енре пачах тепĕр майлă лару-тăру. Раççей Федерацийĕн Финанс министерстви пĕлтернĕ тăрăх – пĕлтĕр регионсен мĕн пур парăмĕ 29% /Атăлçи округĕнчи хăшпĕр субъектăн 65% таран/ ӳснĕ, Чăваш Ен парăмĕ 4% чакнă".

Кредит рейтингĕ Ba2 шайне хăпарни Чăваш Республикин патшалăх хаклă хучĕсене Раççей Банкĕн Ломбард списокне кĕртме май панă тата вĕсен илĕртӳлĕхне ӳстернĕ.

■ **Михаил ВАСИЛЬЕВ**

Çĕр

Камăн мĕн ӳсет?

Шупашкар районĕ нумайăшне илĕртни вăрттăнлăх мар. Эпĕ çуралнă тăрăхра, сăмахран, пушă пĕр лаптăк та çук. Икĕ ачаллисене е виççĕмĕш пепкишĕн çĕрпе тивĕçтересси те чăн йывăрлăха çаврăнать кунта. Çывăх тăванăм ку ыйтупа ăçта кăна çитмерĕ ĕнтĕ, çапах та лав вырăнтан хускалман-ха.

Анчах хăш-пĕр çĕрте çĕр хуçи хут çинче кăна пулни çиеле тухать. Тĕрĕсрех каласан ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрпе тĕллевлĕ усă курмаççĕ. Пĕлтĕр кăна Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн инспекторĕсем асăннă районта планпа пăхнă 106 тĕрĕслев ирттернĕ май саккуна пăхăнман 63 тĕслĕхе шута илнĕ.

Сăмах май, административлă 4 тĕпчев ирттерме те сăлтав тупăннă. Çурла уйăхĕнче Шупашкар район администрацийĕнчен управление килнĕ сыру çула тухма хистенĕ. Патшалăх инспекторĕ А.Андреев каланă тăрăх – "Юрма" агрохолдинг" общество тĕлĕшпе административлă 2 тĕпчев ирттерме тивнĕ. Çырура сырни тӳрре килнине палăртать вăл. Чăнах та, общество арендăна илнĕ пĕр лаптăка /170,8625 га/ юхăнтарса янă тесен те йăнăш пулмĕ. Унта нумай çул ӳсекен курăк кăна мар, 4 метра çитнĕ йывăçтĕм те ешернĕ. 70 гектар çинче тахçанах ним те туса илмен кăна мар, сухаласа та хăварман. Тавралăха сиен кӳме пултаракан тӳнтерлĕхпе кĕрешес енĕпе тата çĕре лайăхлатас, хӳтĕлес тесе çителĕксĕр ĕçленĕ. Ытти 100 гектар çинче те тĕрлĕ хыт-хура, хурăн, чăрăш, хăва ашкăрнă. Анчах та кунта хăть çиелтен сухаланă. Кунсăр пуçне çамрăк йывăçсене касма пуçланине палăртать патшалăх инспекторĕ. Çак ĕçе пуçарнине ырламалла кăна. Анчах та унта темиçе тĕлте çӳп-çап купи те пулнă. Вĕсене тасатма вăй çитернĕ-ши ĕнтĕ?

Иртнĕ çулхи ака уйăхĕнче "Алмаз" обществăна çĕртме уйăхĕн çурринчен 55 гектар çĕр çинче агротехника ĕçĕ ирттерме предписани панă. Палăртнă вăхăт çитсен инспекторсем Вăрман Çĕктер ял тăрăхне тепĕр хут çитнĕ. Асăннă пысăк лаптăка пусă çаврăнăшне кĕртеймен. 10 гектарне сухаланă-ха, ытти çĕрте çаплах тĕрлĕ курăк алхаснă. Ку хуçалăха 40 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Йăлăмри çĕрĕн пулăхлă сийне хырса илни тĕлĕшпе те тĕпчев йĕркеленĕ. Çĕр саккунне уяман "Чăваш топливо" компание 25 пин тенкĕ штарф панă.

Маларах асăннă ял тăрăхĕн 11 сынни Çĕр саккунне епле пăхăннипе те кăсăкланнă инспекторсем. Шел, харпăрлăхри çĕрпе тухăçлă усă курма ăнтăлни палăрман. Лаптăксен хуçисене административшă йĕркепе айăплана.

Шорчекасси ялĕнче те ку ыйту сивĕч. 12 сын çĕрне – пĕтĕмпе 31,44 гектар – тĕрĕсленĕ. Тăпра пахалăхне упраса хăварассине кунта аса та илмен-тĕр: йĕри-тавралла пиçен, армути, утмăл турат тата ытти те ӳснĕ. Ку хутĕнче те РФ КоАП-ĕн 8.7 статйин 2 пайĕпе пăхнă яваплăх пирки аса илтернĕ. Тирпейсĕрлĕхе пĕтерме сĕнсе предписани панă.

Шупашкартан 10 çухрăмра вырнаçнă Атайкасси ял тăрăхĕнче тĕрĕсленĕ 28 çынран 11-шĕ пахча çимĕç туса илменни кăна мар, çум курăкпа кĕрешме пачах та вăй хуманни палăрнă. Çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртмелли çинчен предписани çырнă.

Пĕтĕмпе вара пĕлтĕр çум курăкран тасатса тăман 1564 гектара тупса палăртнă специалистсем. Çавна май юридици вăйĕнчи – 9, должноçри – 8 çынна, 41 гражданина административлă майпа явап тыттарнă. Йĕркесĕрлĕхе пĕтерме хушса 63 предписани хатĕрленĕ.

Çакна та асăнса хăвармалла. Управлени çут çанталăка кӳнĕ сиенлĕхе саплаштарассипе те ĕçлет. Шупашкар районĕнче, сăмахран, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ пĕр лаптăк çинче автостоянка туса кӳнĕ сиене 8 миллион тенкĕлĕх хаклана. Ку укçана район администрацийĕн бюджетне куçарнă.

Çĕрпе тухăçлă усă курассипе çыхăннă ыйту ĕнер çуралман, ăна паян-ыран татса пама пулĕ-ши? Кăçал та ку енĕпе тĕрĕслев ирттерĕç. Юр кайсанах инспекторсем республикăн тĕрлĕ енне çул тытĕç – 160 объекта тĕрĕслеме палăртнă. Шупашкар районĕнче вара – 14. Палăртмалла: ку йыша уйрăм çынсене кĕртмен. Вĕсен списокĕ самай вăрăмрах пуласси паллă. Çум курăкшăнах аванмарланас марччĕ те çав...

■ **Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
управлени ĕçченĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ

Халăхпа кар тăрсан çеç тирпей пулĕ

Çĕнĕ Ахпӳрт ял тăрăхĕ Патăрьел районĕнчи ытти хăй тытăмлăх органĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Вырăнти администраци пуçлăхĕ Валентин Тукмаков калашле, пĕр "семьене" кĕрекен Татмăш тата Кивĕ Катек ялĕсем административлă центртан аякра пулни çеç чăрмавлă. Тĕрĕссипе вара паян вăл та йывăрлăх мар. Темиçе теçетке çул хушшинче ял сынни çак йĕркене те хăнăхнă. Ĕçри тивĕçĕмпе ирпе-ирех ял тăрăхне çитрĕм пулин те, манран маларах вăранакансем ял пуçлăхĕн алăкĕ умĕнче черетре те тăратчĕç. Пĕр-икĕ çынран мĕн сăлтавпа хуçа пӳлĕмне кĕме хатĕрленнипе кăсăклантăм. "ЛПХ илесшĕн",– терĕç вĕсем пурте кĕскен. Çак тĕллевпе кирлĕ справкăсем тутарма çитнĕ иккен.

Вырăнти влаç ертӳçипе тĕп каласăва пикениччен тӳрех çул çинче куçа тирĕнекен таса марлăх пирки калаçу пуçартăмăр. Акă аслă çул хĕрринчи автобуссем чарăнакан вырăнтах çӳп-çап купи "уçнă". Ăна кам, хăçан тасатать – паллă мар. Урам вĕçĕпе çырмаçатрасенче те кун пек тирпейсĕрлĕх пайтах. Ĕçĕпе районта ытти сенчен те пит маттур та харсăр Çĕнĕ Ахпӳртсен культура шайне, ăнланулăхне ӳстерме пулать-ши?

– Ку вăл пирĕншĕн шала кайнă "чир" те пулĕ,– пăшăрханса пуçларĕ каласăва Валентин Петрович.– Кил хуçалăхĕнчен тухакан çӳп-çапа тирпейлĕ пуçтарса ăсатас тĕллевпе урамсене контейнерсем те лартса пăхрăмăр. Усси пулмарĕ. Йăрăраххисем ăна каçхине тултараççĕ те хураççĕ. Кирлĕ пулсан, çĕр улми аврипе кишĕр çулçине те çавăнта пырса силлеççĕ. Тĕлĕнмелле вĕт! Кашни контейнер умне хурал тăратаймастăн-çке. Халĕ вара ятарлă кунсенче кашни килтен михĕпе пуçтарса пынă çӳп-çапа техникăпа тиесе çӳрессине йăлана кĕртесшĕн.

Ял, урам сăн-сăпачĕ, тирпей-илемĕ, тăкăрлăксен капăрлăхĕ вырăнти влаçăн чи малтан татса памалли ыйтăвĕсенчен пĕри темелле. Çавăнпа та ăна пĕччен е иккĕн çеç мар, пурте пĕр çын пек пулса кар тăрсан çеç татса пама пулать. Мĕнле майпа, епле меслетпе? Çакă вара никамран та мар, администрацинченех килет. Ку тĕлĕшпе ял тăрăхĕн кăçал нихçанхинчен те ытларах субботниксене тухма, тарлама тивĕ. Мĕншĕн тесен Питраврa йĕркелекен район кунĕ кăçал шăпах Çĕнĕ Ахпӳртре иртмелле. Хăна-вĕрлене кĕтнĕ чухне вара тирпейлемелли те, тăкакланмалли те пайтах тупăнать.

Юхмапа Пăла тăрăхĕнче çиччĕмĕш хут йĕркелекен уява малараxрисенчен кая мар иртерес ĕмĕчĕ Çĕнĕ Ахпӳртсен те пысăк. Район бюджетĕнчен уйăрнă çур миллион тенкĕн "шăтăкĕсем" паллă: чăн малтанах çулсене тирпейлемелле, клуба тул енчен сăн кĕртмелле, культура мероприятийĕсене ирттерме музыка аппарачĕ туянмалла, афишăсем хатĕрлемелле тата ытти те. Чи кирли вара – уяв ирттермелли вырăна суйласа илсе /ăна Пăла çумĕнчи лапамра тăвасшăн/ хăнасене йышăнмалли, каярахпа вара ял уявĕсене те ирттермелли хăтлă стадиона капăрлатасси. Ун валли вырăнти хыснаран та самаях кĕмĕл расхутлама тивĕ. Пуçлăх кун пирки йывăрлăх пулмасса çирĕппĕнех шантарчĕ. Çавăнпа та Культура çулталăкĕ ыттисемпе танлаштарсан Çĕнĕ Ахпӳрт ял тăрăхĕшĕн уйрăмах асра юласси паллă темелле.

Ял масарĕсене кирлĕ пек тасалăхра тытса, сăваплă вырăна пăхса тăрасси те вырăнти администрацин тивĕçех. Ку ĕçе вырăнта кашни ялтах йĕркене кĕртнĕ. Кивĕ Катексем, сăмахран, ял халăхĕнчен укçа пуçтарсах /администраци те хушнă/ масар вырăнне профнастилпа тытса çавăрнă. Петр Кузнецов хастар ертсе пынипех унти çурта та шăнкăрч йăви пек капăрлатнă. Кăçал Татмăшпа Çĕнĕ Ахпӳртре те ку ĕçе йĕркелесшĕн. Пиртен уйрăлнă тăванăмăрсен вырăнне тасатса-пăхса тăрасси сыввисен тивĕçĕ-çке.

Хальхи вăхăтра республикăра та, районта та пушар хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнас, кун пирки тăтăшах халăхпа калаçусем йĕркелес, нумай ачаллă, ĕçкĕ енне сулăннă çемьесенче пулса вĕсен килĕсенче пушар тухас хăрушлăха сирес тĕлĕшпе ыйтусене çивĕчлетеççĕ. Ку ыйту ял тăрăхĕнче тĕп вырăнта. Çĕнĕ Ахпӳртри муниципалитет пушар хуралĕн пулăшу машинисем районта сиксе тухакан чылай пушара хастар хутшăнни те çакнах çирĕплетет. Районти хăш-пĕр администрацинче пушар хуралне халăх вăйăпе тытса тăма тăрăшаççĕ пулсан, ку тĕлĕшпе кунта виçĕ çынна килĕшӳпе ĕçлеттерме мехел тупни те паха. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çавăн пекех урамсенчи çутăсене "тытса тăрассипе" çивĕчлĕх пулманнине çирĕплетрĕ. Кашни ялтах каçсерен юпасем çинче нормăпа кирлĕ чухлĕ çутă çутнине каларĕ.

Вырăнти влаç органĕн ĕçĕхĕлĕ нумай енлĕ. Вĕсене пурне те йĕрлесе, йĕркелесе пыма администрацинче тĕрев кирлех. Ял старостисемпе депутатсем шăпах обществăшăн тăрăшакан хастарсем. А.Сымкин, Ю.Улангин, А.Баюсов старостăсем, район Пухăвĕн депутачĕ Е.Мартышкин, Ю.Майрушкин, В.Солдатова, А.Леонтьев, С.Тукмакова "халăх тарçисем" пулăшса пынипех халăхпа пурнăçламалли чылай ĕçе çăмăллăнах парăнтараççĕ. Тепĕр икĕ çултан Çĕнĕ Ахпӳртсем те Шăмăршăран илсе килекен таса шыва хăйсем патне туртса çитересшĕн. Çак программăна пурнăçа кĕртесси – малашлăхри пысăк тĕллевсенчен пĕри.

Сăмах май, районта Çĕнĕ Ахпӳрт ял тăрăхĕнчи Кивĕ Катек ялĕнче çынсем ĕçекен, хуçалăхра усă куракан шыв хăйĕн тытăмĕпе чи лайăххисенчен пĕри шутланать. Çавăнпах-тăр кунта вăрăм ĕмĕрлĕ çын ытларах.

■ **Альбина ЕГОРОВА**

Ветслужба

Выльăх-чĕрлĕх ан чирлетĕр

"Хыпар" ыйтăвĕсене республикăн ветеринари патшалăх службин ертӳçи Сергей СКВОРЦОВ хуравлать.

– Выльăха симĕс курăк çине кăлариччен вăхăт нумай юлмарĕ. Унччен мĕнле пăхмалла?

– Пирĕн ветеринарсем фермăсенче час-часах пулаççĕ. Хăш-пĕр чух фураж, утă, ытти апат пĕтнине, ăна тутлăлантарса çитерменнине кураççĕ, – терĕ Сергей Иванович. – Начар выльăх организмĕнче чир-чĕр аталанма пултарать. Çакна зоотехниксем лайăх пĕлеççĕ. Ĕне выльăх умĕнчен паха та тулăх апат ешĕл курăкпа тăрантарма пуçличченех ан татăлтăр.

– Çуркунне хăш амак ерсе инкек кăтартать?

– Ун пекки пайтах. Тĕслĕхрен, кĕтĕве уя çитерме кăларсан тăпраран выльăха Çĕпĕр шыççи е шавлакан карбункул /эмкар/ çакланас хăрушлăх пур. Вăл çĕрĕн çиелти сийĕнче нумай çул упранать. Эмкар халсăрлатсан майракаллă шултра выльăх уксахлать, шыçăнать, чир шала кайсан нумай пурăнаймасть. Тăкак тӳсес мар тесен симĕс "конвейер" çине тухиччен кашни выльăха шыçăпа эмкартан вакцинацилеттермелле.

– Ветстанцисем анализ илсе мĕнле амакран диагноз лартаççĕ?

– Бруцеллезран, лейкозран, туберкулезран, ытти чиртен. Çулталăк пуçланнăранпах уртаракан чиртен прививка тăватпăр. Вакцина туянма службăна федераци хыснинчен укçа уйăраççĕ. Кăçал республикăра çак мур ернĕ виçĕ тĕслĕхе шута илтĕмĕр. Шăмăршă районĕнчи Кивĕ Чукал ялне пĕтĕмпех карантина хупма тиврĕ, мĕншĕн тесен икĕ килти хуçалăхра выльăх чирленине çирĕплетрĕмĕр. Ĕнепе пушмак пăру вилнĕ. Вĕсене вирус тилĕрен ернĕ. Кивĕ Чукалти ĕнене прививка тутарманни палăрчĕ. Çавна пула çемье пысăк тăкак тӳсрĕ. Вăхăтра вакцинацилеттернĕ пулсан шар курмастчĕç. Выльăха усал амак ересрен графикпа килĕшӳллĕн прививка тутарма ан манăр.

– Ветеринарсем йăшăк чĕр чуна пĕрре пăхсах пĕлеймесен чире мĕнле палăртаççĕ?

– Организмра белок, кальци, сахăр, выльăха кирлĕ ытти япала мĕн чухлине, юн йӳçеклĕхĕпе сĕлтĕлĕхĕн шайне, ыттине тĕрĕслеççĕ. Вăл е ку çитмесен рациона пуянлатма, уйрăммăн илсен шăмă çăнăхĕ, трикальцийфосфат, витаминсем, тăвар, хутăш вĕтĕ апат çитерме сĕнетпĕр. Хăш-пĕр фермăра йӳçек силос е сенаж панăран ĕне выльăх кетозпа чирлет. Кун пек чух хырăмлăхра апат начар ирĕлет. Вар хытă апата начар хăваланă пирки лайăх кавлесе вĕтетеймест. Юна тĕрĕслесе тĕрлĕ диагноз лартатпăр.

– Çуркунне чĕп туянаççĕ. Чирли лекмĕ-ши?

– Республикăри фабрикăсенче 4 чиртен /талăкри чĕпе – марекран, эрнерине – гомборăран, çур уйăхрине ньюкаслтан, грипран/ прививка тăваççĕ. Çавăнпа чирлемеççĕ, шанчăклă. Вĕсене туянсан çитĕнтерсе пусичченех вакцинацилемелле мар. Республикăна илсе килсе сутаканнине хăш чир-чĕртен прививка тунине палăртатпăр. Ветеринари свидетельствине тишкерсе тĕрĕслетпĕр. Кайăк-кĕшĕк сывăи, чирлĕ-и – пирĕн çак ыйтăва уçăмлатмалла.

– Апат çитернĕ чухнех чăх тĕк тăкать. Сăлтавĕ мĕнре-ши?

– Сывах вăл. Унăн ан кулян. Фабрикăра пурă пек шап-шур чăхсене çăмарта сахал тунăшăн пусса аша ăсатаççĕ, тĕк пăрахнисем ытларах çăмарта тăваççĕ.

– Чĕп туянаканăн ăна ăçтан илсе килнине çирĕплетекен документ кăтартма ыйтмалла-и?

– Ветврача чĕнĕр. Вăл сиплеме им-çам сырса парĕ. Вылăх-чĕрлĕхе хăвăр пĕлнĕ пек сиплемелле мар.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**
калаçнă

Инспектор "Юмаха" çитсе курнă

Ака уйăхĕн 8-мĕшĕнче федерацин Чăваш Республикинчи инспекторĕ Геннадий Федоров Шăмăршăри "Юмах" ача садĕнче пулнă.

Аса илтеретпĕр: РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич бюджетниксен ĕç укçин шайне хакламалли методологине тĕпчеме хушнă. Чăваш Енре муниципалитет бюджет учрежденийĕсенче çавнашкал ĕç-хĕл пуçланнă та.

"Юмах" ача сачĕ 2013 çулта хута кайнă, вăл 90 вырăнлăх. Любовь Сабанова ертӳçĕ пĕлтернĕ тăрăх – хальхи вăхăтра кунта 21 çын ĕçлет, çав шутран 8-шĕ – педагогсем. Вĕсен ĕç укçи тĕп тата хавхалантару пайĕсенчен йĕркеленет. 2013 çулта вĕрентекенсен шалăвĕ – 14089, 2 тенкĕпе, 2014 çулхи пĕрремĕш кварталта – 19721,6 тенкĕпе танлашнă /ӳсĕм – 40 процент/. Шăмăршă районĕпе шкулченхи вĕренӳ учрежденийĕсенчи педагогика ĕçченĕсен шалăвĕ 2013 çулта 15761,9 тенке çитнĕ.

Тĕл пулу вăхăтĕнче федераци инспекторĕ ача сачĕнчи попечительсен канашĕн ĕçне еплерех йĕркеленипе, учрежденин пурлăхтехника никĕсĕпе паллашнă.

Инна ВЛАДИМИРОВА.

Уйăхлăх

Сыхлав ыйтăвĕпе – семинар

Хулари 1-мĕш клиника больницинчи ĕç сыхлавĕн уполномоченнăйĕсем республикăра иртекен уйăхлăх мероприятийĕсемпе килĕшӳллĕн РФ сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн Чăваш Енри организацийĕн представителĕсемпе – Владимир Федоровпа, Татьяна Константиновăпа, Сергей Максимовпа – тĕл пулнă.

Мероприяти савăнăçлă самантпа пуçланнă: хăнасем ĕç сыхлавĕн пайĕн пуçлăхне Полина Петровăна Хисеп хучĕпе тата хаклă парнепе, Наталья Волкова тата Татьяна Васильева медсестрасене, Сергей Горшков травматолога ĕç сыхлавĕн чи лайăх уполномоченнăйĕн ячĕпе чыслана.

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин пай пуçлăхĕ Кирилл Малюхин канашлăва пухăннисене уйăхлăхпа килĕшӳллĕн ирттермелли мероприятисен планĕпе паллаштарнă. «Рабочисене производствăра хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмалли çинчен аса илтересшĕн, – палăртнă вăл. – Ĕç сыхлавĕ ыйтнине пурнăçлама чĕнекен баннерсене хулара вырнаçтарнă ĕнтĕ, предприятисенче çакна халлаласа ятарлă кунсем, вĕренӳ сĕмлĕ семинар-канашлу, социаллă ыйтăм йĕркелетпĕр. Пуçлăхсен кăна мар, ахаль рабочисен те сыхлав пирки шухăшламалла».

Пухăннисем "Сиплев учрежденийĕсенче ĕç условийĕсене тата сыхлавне çынсем пăхăннине общество енчен тĕрĕслессине йĕркелесси" семинара хутшăннă, РФ сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн Чăваш Республикинчи организацийĕн инспекторĕн Сергей Максимовăн лекцине итленĕ, анкетăна хуравланă.

■ **В.ИЛЬИНА**

Тĕрĕслев

Хĕç-пăшал – тетте мар

Сĕнтĕрвăрри районĕн прокуратури ШĔМĕн вырăнти пайĕнче хĕç-пăшал çаврăнăшне сăнаса тăрассипе çыхăннă саккунсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ. Çитменлĕхсене çиеле кăларнă.

«Хĕç-пăшал çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн граждан тата служба хĕç-пăшалĕн çаврăнăшне шалти ĕçсен органĕсем тĕрĕслесе тăраççĕ. Ятарлă регламентпа килĕшӳллĕн хĕç-пăшала, патронсене граждансем мĕнле упранине тата пăхса тăнине çулталăкра пĕр хутран кая мар тĕрĕслемелле. Прокуратура шалти ĕçсен пайĕн должноçри сыннисем ĕçе кирлĕ пек пурнăçламаннине палăртнă. Хăш-пĕр гражданин хĕçпăшалне 4 çул таранах тĕрĕслемен.

Прокуратура çак тĕслĕхсемпе представлени çырнă, полицин должноçри сыннисене саккуна пăсма юраманни пирки асăрхаттарнă.

■ **И.КОРОТКОВ,**
Сĕнтĕрвăрри районĕн
прокурорĕн çумĕ

Хĕр ача преступнике тытма пулăшнă

Çул çитменскер тĕлĕшпе намăс ĕçсем тунă 57 çулти арçыннăн уголовлă ĕçне Следстви комитечĕн Шупашкарти пайĕ тĕпчесе пĕтернĕ ĕнтĕ. Намăссăр кĕçех суд умне тăрĕ.

Çак арçын каçа хирĕç килне тавăрнакан 14 çулти хĕр ачана çулăхнă. Ăна хăйĕн ар хатĕрне кăтартнă. Пĕрре кăна та мар – икĕ кун çапла хăтланнă. Иккĕмĕш хутĕнче хĕр пĕрчи çакăн çинчен полицие пĕлтернĕ. Унтан арçын хăй сисмелле мар ун хыççăн йĕрлесе кайнă, лешĕ ăçталла çул тытнине право хуралĕн органĕсен сотрудникĕсене каласа пынă. Çавна май пакунлисем преступнике часах тытса чарнă.

К.НИКОЛАЕВ.

Парăмшăн – дисквалификаци

Шупашкарти Мускав районĕн прокуратури "Энерго-Ч" проект центрĕ" ОООра шалу тӳлес енĕпе ĕçлев саккунне мĕнлерех пурнăçланине тĕрĕсленĕ.

Тулли мар яваплă общество хăйĕн ĕçченĕсен умĕнче пысăк парăма кĕнине çирĕплетнĕ: 73 çынна 2 млн тенке яхăн тӳлесе татман. Проект центрĕн ертӳçине Олег Краснова çакнашкаллишĕнех маларах та административлă майпа явап тыттарнине кура ку хутĕнче район прокурорĕ ун пирки КоАПăн 5.27 статйин 2-мĕш пайĕпе ĕç пуçарнă.

Административлă материала тишкерсе суд прокурор ыйтăвне туллин тивĕçтернĕ, "Энерго-Ч" ертӳçине çулталăкăха дисквалификациленĕ. Суд йышăнăвĕ саккунлă вăя кĕмен-ха.

К.АНТОНОВ.

Çивĕч ыйту

Ирĕксĕртен-çке, ывăлăм, ирĕксĕртен...

Хаçат ĕçĕпе çула тухсан пĕлĕшĕмпе тĕл пултăм. «Питĕ вăхăтлă çитрĕн. Паян ывăлăмăн çуралнă кун. Хăна-вĕрле пухмарăм. Кичем пуласран кӳрше çеç чĕнтĕм», – терĕ вăл.

Кĕрекене никам та ларман-ха. Çын çуккипе усă курса Ванюк ашшĕне: «Атте, эсĕ текех Мускава ан кай-ха. Çулла ялта та ĕç темĕн чухлех. Манăн санпа вырсарни кун пулă тытма каяс килет», – терĕ.

– Тĕрĕс калатăн, Ванюк. Мускава тем пек каймăттăм та, анчах урăхла май çук-çке. Хăв вара планшет кирлĕ тетĕн. Аппу кăçал шкул пĕтерет, университета вĕренме кĕресшĕн. Гаражри «Жигули» те йăлт тĕссĕрленнĕ. Унпа Шупашкара кайма мар, ял тăрăх çӳреме намăс. Çĕнни туянас шухăш пур та, укçа çитмест-çке. Ирĕксĕртен-çке, ывăлăм, ирĕксĕртен каятăп Мускава...

Миша сывлăхĕшĕн 2-3 черкке çутти сыпнипе-ши, ашшĕн кăмăлĕ çемçелнĕ пулас. Тарăн шухăша кайнăскерĕн пичĕ тăрăх çутă тумламсем йăрăлтатса анчĕç.

Шапаш çулĕ мĕн тери теветкеллĕ те тумхахлă пулнине вăл темиçе çул каяллах лайăх туйса илнĕ. Уйăх каялла çеç пĕр рабочи çӳлти хутран ӳксе вилнĕ. Теприне вара нухрат сахалрах лекнĕ тесе кăмăлсăр пулнăран тахăшĕ çурăмран пăшатанпа яшлаттарнă. Чул хула облаçĕнчи пĕр ялта кăмака тăвакан чăваш виллине çăлра тупнă...

Тĕнче касса çул çӳрекен чăн пурнăç курать теççĕ. Укçа чул кастарать теççĕ-ха та, ютра ĕçсе-сӳпĕлтетсе тăна çухатас марччĕ. Унсăрăн шар курăн. Атте-анне, тăван-пĕтен юнашар мар та – инçетре хӳтĕлекен çук. Чирлесен те, пĕр пуссăр тăрса юлсан та никамран та пулăшу кĕтсе илеймĕн. Çавăнпа шапаша çынсем пĕччен-иккĕн мар, бригадăпа тухса çӳреççĕ.

Çын çут тĕнчене телей курса ырă пурнăçпа кун кунлама килет. Мĕн пур чĕр чун пекех лайăххине çеç шырать. Хăтлă пурăнма нухрат çителĕклĕ пултăр, ăна вара тăван тăрăхра яланах кирлĕ чухлĕ ĕçлесе илейместĕн.

Укçа-тенкĕ хăвна ыттисемпе танах пулма кирлĕ: çурт-йĕр çĕклемелле, ача-пăча çитĕнтермелле, вĕрентсе кăлармалла, çемье çавăрма пулăшмалла... Ыйтусене вырăнта татса пама йывăртан çынсем юта каяççĕ те. Пурнăç тикĕс килменрен ăна хăшĕпĕри таканари шывпа танлаштарать.

Ĕлĕк те укçашăн юта çӳренĕ. «Вербовкăпа» тухса кайнă вăл», – тетчĕç. Халĕ ăна «шапаш» сăмах улăштарчĕ. Ялта ĕç вăйĕ чакасран шикленнĕрен паспорт паман вăхăт та пулнă. Эпĕ те тӳссе курнă вăл тапхăра, 24 çула çитсен тин паспорт илтĕм, ăна та пулсан аран-аран.

Промышленноç халсăрланнă, ял хуçалăхĕ арканнă çулсенче мигранти ыйтăвĕ калама çук çивĕчленчĕ. Çакă малашне те чакмасси паллă-ха ĕнтĕ. Производство çĕнĕ технологисемпе аталанса пыни ĕç вăйне тĕртсе кăларать. Чăваш Ен ахаль те çĕршывра халăх йышлăхĕпе малти вырăнсенчен пĕрне йышăнать, апла пулсан ĕç вăйĕ ытлашшипех. Унăн ăçта кайса кĕмелле, пурăнмалли çăл куçа ăçта шырамалла? Ирĕксĕрех тĕнче касса çӳреме лекет. Çакăнпа республика ертӳлĕхĕ те килĕшет. Михаил Игнатьев Пуçлăх Чăваш Енре тухса тăнă лару-тăру çинчен лайăх пĕлет.

Эпĕ республикăра мигранти тĕлĕшĕпе лару-тăру хăш шая çитнине палăртас тĕллевпе Чăвашстат материалĕсемпе паллашрăм. Юлашки 3 çулта Чăваш Енрен тухса каякансен йышĕ кунта килекенсемпе танлаштарсан çулсерен пысăкланать иккен. Çакăнта, паллах, Çурçĕре, Мускавпа Питĕре, ытти хулана ĕçлеме тухса каякансем те кĕреççĕ.

Халлĕхе Шупашкарпа Канаш хулисем аптрамаççĕ. 2011 çулта тĕп хулара 3539 çын хушăннă, пĕлтĕр вара – 1420 çеç. Канашра – 120 тата 54. Пурăна киле çак хуласенче те мигранти ыйтăвĕ çивĕчленессе пĕлтермест-ши çакă?

Производство лайăх аталаннă районсенче кăтарту пĕчĕкленни савăнтарать. Мускавра е Питĕрте ĕçленĕ çынсен пĕр пайĕ каялла таврăнса кунтах ĕçе вырнаçнă тĕслĕх темиçе те. Вăрнар районĕнче 2011 çулта акă 653 çын чакнă, 2013 ç. – 476, Комсомольскинче – 258 тата 161, Шупашкар енре – 382 тата 215. Çав вăхăтрах социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕ япăх районсенче кăтарту ӳсет çеç. Халăх республика тулашне ытларах тухса çӳрет. Хĕрлĕ Чутайра 2011 ç. 35 çын чакнă, 2013 ç. – 155, Сĕнтĕрвăрринче – 15 тата 134. Çĕмĕрлере 2011 ç. 42 çын хушăннă, 2013 ç. 124 çын сахалланнă.

Эпĕ анчахрах Элĕк районĕнчи Ехремкасси ял тăрăхĕнче пултăм. Ку тăрăхра лару-тăру лайăхланни сисĕнет. 2011 çулта 405 çын чакнă, 2013 ç. – 320, 2013 ç. – 244. Икĕ çул хушшинче республика тулашĕнче ĕçлекенсен йышĕ 161 çын сахалланнă эппин.

– 13 яла пĕрлештерекен ял тăрăхĕнче 3 хуçалăх. «Волга» тĕппипех пĕтрĕ. «Авангард» ЯХПКпа «Правда» АУО та питĕ хавшаса çитнĕ ччĕ, – терĕ администраци пуçлăхĕн çумĕ Алина Андреева. – Район центрĕ инçех мар та, хĕрарăмсем унта ĕç тупаççĕ, арçынсем валли вăл çукрах. Мускава, Хусана, Çурçĕре те каяççĕ. Ĕç кĕнекипех, 2-3 çуллăхах. Малтан хăйсем тĕпленеççĕ, унтан мăшăрĕпе ачисене илсе каяççĕ.

Алина Васильевна лайăххинчен ытла мигранти япăх енĕсене палăртрĕ. Шел, каялла вилсе таврăнакан та пур. Чул хула облаçĕнче йĕкĕтĕн чунĕ тухнă авă. Пĕлтĕр тепĕр каччă вилнĕ. Специальноç хăшĕн пур, теприн çук – пурĕ пĕр тухса каяççĕ. Пысăк укçа илĕртет пулас та, ытларахăшĕ – шкул хыççăн, специальноç илмесĕрех. Теприне вара аслă пĕлӳллĕ диплом та чараймасть. Кунти пĕчĕк шалу кама тивĕçтертĕр? Упăшкисем хыççăн арăмĕсем те çула тухаççĕ. Ачисем вара кукамăшĕпе е асламăшĕпе юлаççĕ. Пĕлӳ шайĕ те чакать вĕсен, тивĕçлĕ воспитани те илеймеççĕ. Урам ытларах илĕртет.

Шапаш япăх витĕм кӳнин тепĕр енĕ – арçынсем аманса, чирлесе таврăнни.

– Темĕнле условире пурăнаççĕ. Тен, сивĕ те нӳрĕ вакунсенче выртса тăраççĕ – эпир пĕлместпĕр вĕт, – тет Алина Васильевна. – Ӳпки шыçать, туберкулез ерет, нерв пăсăлать. Усалланаççĕ арçынсем. Мĕн япăх – йăлтах кунта куçса килет. Ĕçкĕ тата, ниме тăман ĕçкĕ. Çитеççĕ, ĕç пуçланнине паллă тăваççĕ. Таврăнаççĕ – пысăк укçапа тĕрĕс-тĕкел килнĕшĕн 2-3 черкке çĕклемелле. Хĕрарăмсем те пĕрле хутшăнса ĕçке ереççĕ. Çакă чи хăрушши. Темиçе çул каялла Ехремкасси шкулĕнче 9-мĕш класра вĕреннĕ хĕр ача ашшĕ-амăшĕ алкоголизм чирĕпе асапланнăшăн, çавна май хăй япăх тумпа клуба тухма вăтаннăшăн çакăнса вилнĕ.

Хĕрарăм мĕншĕн ĕçет-ха? Пĕрре – мăшăрĕ юнашар çуккишĕн, тепре – пĕтĕм йывăрлăх хăйĕн çине тиеннĕрен ниçта кайса кĕреймен пирки. Пахча ĕçĕ пуçланать акă. Ăçта кайса кĕмелле унăн? Кĕвĕçӳ туйăмĕ те чунне шĕкĕ евĕр çиет.

Чăвашстат панă мигранти таблицине паллаштарсан Алина Андреева каласу темине улăштарчĕ. «Тĕрĕсех, – килĕшрĕ вăл. – Юлашки çулсенче пирĕн ял тăрăхĕнче те лару-тăру лайăхланчĕ. Икĕ хуçалăхăн малашлăхĕ пур. Хуçисем улшăнчĕç. «Правда» пуçĕнче халĕ – Патăрьел районĕн каччи Владимир Уфуков, «Авангард-шăн» – Сергей Петров яваплă.

Ехремкасси «Правдăна» кĕнĕрен тата хăй çак ялта пурăннăран Алина Васильевна ытларах ку хуçалăхпа паллаштарчĕ. Владимир Владимирович унччен шапаша çӳренĕ çамрăксене ĕçпе илĕртме тытăннă иккен. Çамрăксен ушкăнĕ халĕччен джунглие аса илтернĕ сада йĕркене кĕртнĕ. Анатолий Михайлова бригадира суйланă. Туратсене иртнĕрен улмуççисем халĕ илемлĕ курăнаççĕ. Ытти çул пан улми çĕрсе пĕтнĕ. Кăçалтан ăна Элĕкри улма-çырла комбинатне леçсе услам илесшĕн хуçалăх.

Алина Васильевна килсенче ĕне йышĕ хушăнма тытăнни, ялта ĕçлесех хушма хуçалăха сыпăнтарса пыракан нумайланни, çын пурăнман çуртсене алхапăл туянни çинчен савăнсах пĕлтерчĕ. Хăшĕ 4-6 ĕне таранах усрать иккен. Теприсем техника, мотоблок таврашне юсама ăста. Металран мунча кăмаки тăвакан та пур. Хурт-хăмăр ĕрчетсе, купăста, помидор, чечек калчи çитĕнтерсе, çыхсатĕрлесе, кăçатă йăваласа услам илеççĕ. Юрий Сергеевичпа Елена Германовна Багровсем ачисемпе пĕрле çу каçипех эмел курăкĕ пухаççĕ. Типĕтсе хатĕрлев кантурне леçеççĕ.

– Пурнăçа йӳнеçтересси йăлтах çынран хăйĕнчен килет, – терĕ Алина Андреева. – Вăрманкасра пĕр çын пурăннă. Вăрçă хыççăнхи çулсенчех пулнă-ха ку. Килне таврăннă хăй, пăхать – килĕ-çурчĕ çав тери юхăннă. Мĕн тумалла? Вара вăрмантан улмуççисем кăларса килет. Лартать вĕсене, сыпать. Пĕрле хурт йăвине те куçарса килнĕ вăл. Пан улми, пыл сутса пурнăçа йĕркелесе янă.

Эпĕ малтанах юмах пулĕ ку тенĕччĕ.

– Чăнах çапла пулнă, – терĕ Алина Васильевна. – Пурнăç йывăр, укçа çук тесе кахал тата ĕçке ернĕ çынсем нăйкăшаççĕ. Ӳркенмен çыннăн вара килĕ-çурчĕ те хӳхĕм, ачи-пăчи те тутă. Выльăх-чĕрлĕхĕ те картиш тулли.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Ăраскал

Телейлĕ ватлăх

Вăрнар-Элĕк маршрутлă автобусра манпа пĕр çулалли хĕрарăм юнашар ларчĕ. Калаçу пуçартăмăр. Клавдия Ермолаева Калинино салинчи ывăлĕ патне çула тухнă.

65 çул каяллахи сăн ӳкерчĕк куç умне тухрĕ. Анне мана Ураскилт чиркĕвне илсе кайнăччĕ. Кунта хитре тутăр çыхнă хĕр ача та пурччĕ, хăй ман çӳллĕшех, Клати ятлă иккен.

Эпĕ вĕсен ялĕнчи шкула 3 çул çӳрерĕм. Çак хĕр ача манран пĕр çул юларах вĕренетчĕ. Вăл 7 çул пĕлӳ пухнă хыççăн Ульянов ячĕллĕ хуçалăхра 5 çул сысна пăхрĕ, унтан 30 çул ытла ялти фельдшер-акушер сиплев çуртĕнче санитарка пулчĕ.

Клавдия Васильевна халăх сиплевĕн меслечĕсене ачаранах лайăх пĕлнĕ. Тухтăрсемпе пĕрле чирлисене сыватас ĕçе хутшăнатчĕ, çие юлнă хĕрарăмсене вăл темиçе те çăмăллатнă.

Иккĕмĕш мăшăрĕ Семен Никифорович унран 10 çул аслăрахчĕ, анчах çав тери кăмăллăскерччĕ. 44 çул килĕштерсе пурăнчĕç. Шел, упăшки пĕлтĕр пурнăçран уйралчĕ. Турă вĕсене ача-пăча пиллемен çав, анчах ватăсем тăван кил вучахне сӳнтерес темен.

2001 çулта Клавдия Ермолаева Çĕмĕрлери тăлăх ачасене пăхакан вырăна çитет, сывлăх енчен хавшакрах арçын ачана асăрхать. Кирлĕ документсем тутарса унта тепре каять. Алешăна Мăн Вылăна илсе килет. Вăл вăхăтра арçын ачан чĕлхи аталанса çитеймен, пичĕ шуранка пулнă. Усрав амăшĕ ăна халăх медицинин меслечĕпе тĕрлĕ курăкран эмел хатĕрлесе сиплет, сывлăхне çирĕплетет.

Халĕ Алеша 17 çулта, пур предметпа та «4» тата «5» паллăсемпе вĕренет. Пушă вăхăтра сăвă-калав шăрçалать. Республикăра Интернет пĕлĕвĕ илекенсен хушшинчи пултарулăх конкурсне хутшăнать, пултарулăхпа палăрать. Унăн «Манăн ĕмĕтри вĕрентекен» калавĕ журналта пичетленнĕ. Каччă вырăс чĕлхипе литература урокĕсене кăмăллать.

Семен Никифорович пурăннă чухне хуçалăх ĕçĕсене хастар хутшăннă: мотоблокпа сухаланă, утă çулнă, алăран пуртă-сава яман.

2006 çулта Клавдипе Семен Çĕмĕрлерен 8 çулти хĕр ачана усрава илнĕ. Нина астмăпа чирленĕ. Кил хуçи арăмĕ ăна 2 çул тăрăшсах сипленĕ хыççăн чир-чĕр парăнать. Халĕ хĕр 9-мĕш класра лайăх вĕренет.

Клавдия Васильевна 7 теçетке çула хыçа хăварнă пулин те хăйне питĕ телейлĕ туять. Пĕччен мар вăл. Юнашар – ывăлĕпе хĕрĕ. Алеша арçын ĕçне пурнăçлать, Нина ĕне сăвать, кил-çурт тирпейлет.

■ **Владимир ЕГОРОВ**

Киленӳ

Алла вĕрентнĕ кушак çури тейĕн

Пушă вăхăтра кашниех мĕнпе те пулин йăпанать, юратнă иленӳпе кăмăлтан киленет. Страус е пони усракан халĕ республикăри чылай ялта тĕл пулать. Хăйсем фермер та, усламçă та мар, укçашăн çунмаççĕ. Мĕнпе те пулин вĕçĕмсĕр кăсăкланнăран пирĕн тăрăхра сайра тĕл пулакан чĕр чунсене ĕрчетесшĕн.

Чакаç ялĕнчи Алексей Алексеевăн çывăх тусĕ Çĕмĕрле районĕнче пурăнать. Вăл Вьетнам сысни усрама тытăннă. Ăна кура Алексей те чун йăпатмăш ĕçе кӳлĕннĕ. Çак ăрат çинчен Интернетра нумай вуланă. Халĕ унăн хуçалăхĕнче – 5 ама, пĕр аçа тата 22 çура, икĕ качака. Ашшĕамăшĕн хушма хуçалăхĕнче çĕнĕ йышши выльăх ĕрчетес шухăш Алексеевсен çемйине шашлăкпа наркăмăшланнă хыççăн пырса кĕнĕ.

– Супермаркетра сутакан аш-какай килĕшми пулчĕ. Хула пурнăçĕ те йăлăхтарма тытăнчĕ. Эпĕ экономист, Шупашкарти строительство организацийĕсенчен пĕринче ĕçлетĕп. Мăшăрăм бухгалтерта тăрăшать. Ялшăн вара тунсăхлатпăр, тăван енре часчасах пулатпăр, – тет 30 çултан иртнĕ Алексей Витальевич. – Вьетнам сысни – сайра йышши ăрат. Ахальтен çĕре кунĕпех «сухалама» вăйлă. Чирлемеççĕ, сывлăхĕ çав тери çирĕп. Алексеевсене районти ветеринари службинче вăй хуракансем ырă сĕнӳ канашпа пулăшаççĕ, тăрантарма та питĕ ансат. Çĕр улми, выльăх кăшманĕ, кишĕр, ытти çимĕçе те чĕрĕллех ситереççĕ – электроэнерги, газ перекетленет. Утă, урпа, пăрça кĕрпи, комбикорм – нимĕн те тиркемеççĕ.

Иммунитет хатĕр, кил картишне çĕмĕреççĕ, варалаççĕ – сыхласа ĕлкĕрме те çук. Вьетнамец вара, лăпкă та йăваш – алла вĕрентнĕ кушак çури тейĕн. Тата акă мĕншĕн килĕшет: çерем çĕтес йăла çук, урай хăмисене кăшламаççĕ, шăршă кĕмест.

Сыснасен ар ӳсĕмĕ 3-4 уйăха аталанать. Часах çитĕнни амасене ăрата малалла хăвăртрах ĕрчетме пулăшать. 114 кунран çăвăрлама вăхăт çитет. Ама пĕрремĕш хутĕнче 5-10 çура тăвать, малалла – 10-20. Çавăнпа хушма хуçалăхра сысна йышĕ ӳснинчен тĕлĕнмелли çук.

Вьетнам сыснин какайĕ çемçе те тутлă, çуллă мар – чăнласах диета апачĕ. Алексеевсем шӳрпе, шаркку пĕçереççĕ, шашлăк, кăлпасси, консерв хатĕрлеççĕ. Шаритленĕ сысна çури уявсенче сĕтеле илемлетет.

Малтанлăха тăванĕсемпе тус-юлташĕ çакнашкал иленӳ Алексейшăн вăхăтлăх кăмăл туртăмĕ пулĕ тесе шухăшланă. Çук иккен, илĕртӳллĕ выльăхран иккĕмĕш çул хăпаймасть. Вăл кунсăр пуçне хурт-хăмăр та тытать. Техĕмлĕ аш-какая тăраниччен çинĕ хыççăн пылак чей ĕçме мĕнешкел кăмăллă!

■ **Виталий АЧЧА.**

Канаш районĕ

Шăпа

Çуралнă тăрăх чуна çывăхрах

Ача чухне кам пулма кăна ĕмĕтленместпĕрши? Романтика шыравĕпе хĕмленсе шухăшпа таçта та пулса куратпăр. Май килсен çула тухатпăр.

Зоя Никитинăна та шăпа Çĕнĕ Шупашкара илсе çитернĕ. Кунта вăл тĕрлĕ строительство организацийĕнче вăй хунă: бетонщица, штукатур-маляр, кирпĕч хуракан... Çав вăхăтрах общество ĕçĕнчен те аякра тăман. Хăй вăй хуракан вырăнта комсомол организацийĕн секретарĕн, профком членĕн тивĕçĕсене пурнăçланă. Тăрăшулăхпа хастарлăх кăтартнăшăн ăна Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе, «Вуннăмĕш пилĕк çуллăх ударникĕ» паллăпа, тĕрлĕ шайри Тав хучĕсемпе чысланă, «Ĕç ветеранĕ» ят панă.

Хулари хăтлă хваттерте пурăнма мĕнешкел ырлăх! Апла пулин те пурăна киле Зоя Геннадьевна тăван енĕн тунсăхлама тытăннă. Тепĕр чухне эпир, ялтан хулана пурăнма куçнă çынсем, хамăра читлĕхри кайăк евĕр туятпăр. Ирĕклĕхре – анлă уй-хир, улăх-çаран ытамĕнче – пулас килет. Зоя Никитина тăван яла – Красноармейски районĕнчи Яманака – таврăннă. Ашшĕ-амăшĕн кил вучахне сӳнтерес темен.

Зоя Геннадьевна çурта пысăклатса илемлетнĕ. Халĕ ăна çут çанталăк газĕпе хутса ăшăтать. Кил хушшинче çăл чавтарнă. Пахча çимĕç иртерех туса илес тĕллевпе теплица хăтлăлатнă. Пысăках мар сад чĕртнĕ. «Çу кунĕсем çитсен канăç çук вара: çĕр улми, пахча çимĕç акса-лартса çитĕнтеретпĕр. Ывăлпа хĕр пулăшаççĕ мана. Ара, çимĕçĕпе пĕрлех усă куратпăр вĕт», – тет ял пурнăçне ытарайманскер.

Кӳршĕсемпе, ял-йышпа вăл хăвăрт пĕр чĕлхе тупнă. Пĕр-пĕрне пулăшасси ырă йăлара. Уçă кăмăлшĕн хисеплеççĕ ăна. Район депутачĕсен Пухăвĕн председателĕн çумĕ, «Красное Сормово» ООО ертӳçи Святослав Иванов тата Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Пантелеймонов пулăшу кӳнине пĕлтерчĕ кинемей. Вăл пурăнакан урама шыв пăрăхĕ хунă.

Зоя Никитина тирпей-илем кĕртес тĕлĕшпе йĕркелекен санитари кунĕсене, çуркуннекĕркунне йывăç лартмалли уйăхлăха хутшăнать. Халĕ вăл – ялти 27 ватăн çĕр пайĕсене вырăнти хуçалăха арендăна памашкăн килĕшӳ тăвассипе ĕçлекен уполномоченнăй. Унпа пĕр шухăшли чылай: Зоя Иванова, Галина Пирошкина, Рена Иванова, Валентина Тимофеева, Татьяна Иванова...

Общество ĕçне хастар хутшăннăшăн Зоя Никитинăна ял тăрăхĕн администрацийĕ чăваш халăх хаçатне «Хыпара» çырăнса панă.

Красноармейскинчи граждансен конференцийĕнче ăна район администрацийĕн Тав çырăвĕпе чысларĕç. «Тăван кил мана тулли телей, савăнăç парнелет. Çуралнă тăрăх чуна çывăхрах çав», – тет Зоя Геннадьевна.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**

Сăн ӳкерчĕкĕ авторăн

Шухăш

Мăнуксене шел...

Таисия Михайловнăна /хăй ыйтнăран ятне улăштартăм/ нумай çул пĕлетĕп. Тĕл пулсан чарăнса тăрсах чылайччен калаçатпăр. Вăл Вăрмар районĕнче пурăнать. Шкул хыççăн Чăваш патшалăх ял хуçалăх институтĕнче вĕренсе зоотехник дипломне илнĕ. Ăна ĕçлеме кӳршĕ района янăччĕ.

Кавча тухсан тăван ялах таврăнчĕ. Самаях опыт пухнăскере совхозра тĕп зоотехник должноçне шаннă. Вăл çулсенче ĕне ферми иккĕччĕ, сысна вити те пурччĕ. Хуçалăх республикăра та малтаччĕ.

Шел, çĕнĕ йĕркелӳ тапхăрĕнче 9 ялтан тăракан совхозран 3 колхоз туса хучĕç. Çакăнтан пуçланчĕ те ял хуçалăхĕ хавшасси. Хаксене ирĕке ячĕç, налуксем ӳсрĕç, патшалăх пулăшма пăрахрĕ – çакнашкал йывăрлăха мĕнле колхоз тӳсейтĕр?

Ял хуçалăх таварĕн хакĕ çаплипех юлчĕ темелле, тырпул та, аш-какайпа сĕт-çу та тупăш кӳреймерĕç. Тепĕр тесен вĕсене вырнаçтарма та йывăрччĕ. Йӳнетессе кĕтсе тирпейлекенçĕсем юриех йышăнма тăхтатчĕç пулмалла.

Унччен завод-фабрикăсем ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсене шефа илесси йăлана кĕнĕччĕ. Техника енчен те, пысăк ĕççире те питĕ пулăшатчĕç. Акционерлă обществăсене куçсан хевти чакрĕ пулас. Хăйсем те инвесторсене шырама тытăнчĕç.

– Колхоза та панкрута кăларчĕç, пурлăхне йӳнĕллех çĕнĕ пуяна сутрĕç, – тет Таисия Михайловна. – Халĕ хуçалăхăн пурлăхĕ те, ячĕхисепĕ те çук, фермăсем ишĕлеççĕ. Юрать-ха тивĕçлĕ канăва тухма ĕлкĕртĕм. Мăшăрăм тăрăшнипе килте сысна усраса виçĕ çул тертлентĕмĕр, усăлăхĕ пулчĕ-ши – пĕлеймерĕмĕр. Ачасем ашкакайсăр лармарĕç – çавă çеç. Çĕрпе усă курасшăнччĕ, анчах тыр-пула ĕлĕкхи пек çурлапах вырса пуçтараймăн. Лайăх техника кирлĕ. Арендăна илнĕ лаптăка каялла патăмăр. Упăшка ватлăхра асаплана-насшăн мар. Анкартинчи 25 сотăй та çитет. Ĕне, 10 сурăх, чăх-чĕп усратпăр. Утă хатĕрлеме ачасем пулăшаççĕ. Хĕл каçипе сĕт аван сутăнчĕ, халĕ йӳнелсе пырать. Заводсемшĕн ытлашши пулнă имĕш. Çав вăхăтрах садиксенче мăнуксене ют çĕр-шывран кӳрсе килнĕ типĕ сĕтрен хатĕрленине ĕçтереççĕ. Питех те шел вĕсене. Çитĕнекен организма ĕне сĕчĕ кирлĕ. Пĕрре-хинче садикре хама та апатланма тӳр килчĕ. Яшкари ĕне какайĕ чĕн пек хытăскер. Тахăш çĕр-шывран кӳрсе килнĕскер шăнтмăшра темиçе çул выртнă-ха. Садик-шкула çамрăк выльăх аш-пăшĕпе нивушлĕ тивĕçтерме май çук?

Тарăн шухăша ячĕ Таисия Михайловна сăмахĕ. Шупашкарта пурăнатпăр эпир, апатçимĕç туянма пасара тухатпăр. Сĕт-турăх, услам çу, ашкакай, ыттине те малашне ялта пурăнакан паллана çынсенчен çеç туянмалла пулĕ. Çапла шухăшласа уйрăлтăм çамрăк чухнехи тус-пĕлĕшрен.

■ **Александр ВИШНЕВСКИЙ**

Ăш вăркавĕ

Ырă улшăнусемпе савăнтарĕ-ши?

Эпĕ «Хыпар» хаçатпа нумай çул туслă çыхăну тытатăп. Çĕнĕ номерĕ тухасса тӳсĕмсĕррĕн кĕтетĕп, алла лексен кашни страницăпе тĕплĕн паллашатăп.

Шупашкарта пурăнатăп пулин те ялта çуралса ӳснĕрен унăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн, демографи лару-тăрăвĕн çивĕч ыйтăвĕсем хытах шухăшлаттараççĕ. Тĕрĕссипе, вĕсем çеç те мар: усă курман тата пай çĕр лаптăкĕсем, юхăннă хуçалăхсем çаплипех ура çине тăрайманни, ĕççĕрлĕх, тискерлĕх тымар яни...

Хаçатри «Туслашрăн тăк лашапа – ан хăвала пушăпа», «Тухăçсăр гектарсем, шухăша яракан тĕслĕхсем», «Ырри чылай, çитменлĕх те сахал мар» тата ытти материала та савăнса вуларăм. Республикăра пусă çаврăнăшне кĕртмен хыт хураллă уйсен лаптăкĕ çав-çавах пысăкки тĕлĕнтерчĕ.

Шупашкар районĕнче çитĕннĕ эпĕ. Çавăнпа ку тăрăха лайăх пĕлетĕп. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-80-мĕш çулĕсенче «Слава» совхоз мĕн тери аталанса çитнĕччĕ! Майракаллă шултра выльăх çеç 4 комплекс тулличчĕ. Теплицăсенчи ем-ешĕл çимĕç куçа илĕртетчĕ.

Ишекре тырă типĕтекен, Мăн Маркара витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрлекен агрегатсем завод евĕр кĕрлени таçтан илтĕнетчĕ.

Юлашки 15-18 çулта çаксем йăлт арканчĕç. Аса илсен чун хурланать. Мăн Маркари хăй вăхăтĕнче 300 ытла ача вĕреннĕ шкул та хупăнчĕ вĕт.

Эпĕ текех çамрăк мар ĕнтĕ. Тахçанах тивĕçлĕ канура. Иртнĕ кунсене аса илсе йăпанатăп, ăш вăркавне пусаратăп. Ытла ватăлса кайиччен тăван енĕм вăй илсе паркалансаталанса кайнине курас килет, анчах ырă улшăнусемпе савăнтарма ĕлкĕрĕ-ши вăл?

■ **Михаил КАРПОВ**

Кăларăма **Валентин ГРИГОРЬЕВ** хатĕрленĕ.

Тĕрĕ ытамĕнче

Куславкка районĕнчи Кунерти информаципе культура центрĕнче чăваш тĕррисен «Хĕрарăм аллин ăшши» курав уçăлчĕ.

Тĕрĕллĕ тутăрсем, сĕтел çитти, ал шăлли... Чуна илĕртекенни темĕн те пур кунта. Куракансене çыхнă минтерсем уйрăмах килĕшрĕç. Кашни тĕрĕ – хăйне евĕр тĕнче. Тĕссен вылянчăк улшăнăвĕ ал ĕçĕсен илемне тата та вăйлатать. Капăр япаласене Кунерти ваттисен çурчĕн ертÿçи Раиса Михайлова ăста хатĕрленĕ.

Çакăн евĕр куравсем çынсене чăваш тĕррин илемне чунпа туйма вĕрентеççĕ, кăмăл-сипет пуянлăхне кăтартаççĕ.

И.ВАСИЛЬЕВА.

Пĕчĕклех воспитатель пулма ĕмĕтленнĕ

Вăрмар поселокĕнчи «Ромашка» садикри Елена Николаева шкулта вĕреннĕ чухнех ачасемпе ĕçлеме ĕмĕтленнĕ, çавăнпах педагог профессине суйласа илнĕ. Лаша пуласси тихаран, çын пуласси ачаран паллă теççĕ. «Пĕчĕк чухне пуканесемпе шкулла выляттăм та, анне яланах вĕрентекен пулатăнах пулĕ тетчĕ», – ачалăхне тулли кăмăлпа аса илчĕ воспитатель.



Елена Геннадьевна кăçал «Çулталăк воспитателĕ» конкурсăн районти тапхăрĕнче çĕнтернĕ. Кун йышши конкурса пĕрремĕш хут хутшăннăскер шкул çулне çитменнисемпе ĕçлекен 11 педагог хушшинче пĕрремĕш пуласса никам та кĕтмен пулĕ. Чылай тĕрĕслев витĕр тухнă вĕсем: презентаци, ăсталăх сехечĕ, «çавра сĕтел», уçă мероприяти... Пĕр-пĕрин опычĕпе паллашнă. Ахăртнех, çĕнтерÿçĕн ĕçĕпе ăсталăхне пысăк хак панă жюри членĕсем. Палăртма кăмăллă: 2013 çулта та «Ромашка» садик ĕçченĕ – музыка ертÿçи Светлана Васильева – районти конкурсра пĕрремĕш вырăн йышăннă, республикăри чи лайăх 5 педагог йышне кĕнĕ.

Елена Николаева Канаш педагогика училищинчен вĕренсе тухнă, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче пĕлĕвне тарăнлатнă. Пуçламăш классен вĕрентекенĕн дипломне алла илнĕскер 10 çула яхăн Çĕнĕ Лапсарти 42-мĕш, Шупашкарти 15-мĕш коррекци шкулĕнче ĕçленĕ. 2007 çултанпа Вăрмар поселокĕнчи «Ромашка» садикре вăй хурать. Николаевсем Эçпепе ялĕнче пурăнаççĕ, икĕ ача çитĕнтереççĕ. Ывăлĕ Даниил Вăрмарти пĕрремĕш вăтам шкулта 3-мĕш класра вĕренет, хĕрĕ Анастасия садике çÿрет. Мăшăрĕ Владимир строительство организацийĕнче ĕçлет.

«Ача-пăча хушшинче хуйхасуйха, йывăрлăхсене манатăн. Вĕсем вăй-хăват параççĕ, савăнăç парнелеççĕ. Эпир вара пĕчĕкскерсене занятисенче ыррине усаллинчен, хитрелĕхе илемсĕрлĕхрен уйăрма вĕрентетпĕр. Ачасене çут çанталăк черченлĕхĕпе паллаштарни те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Кашни самант усăлăхпа ирттĕр, ялан çĕннине пĕлччĕр тесе тăрăшатпăр», – терĕ Вăрмар районĕнчи чи лайăх воспитатель. Хальхи вăхăтра вăл 4-5 çулсенчи ачасемпе ĕçлет, ушкăнра – 23 шăпăрлан. Вĕрентекен ертсе пынипе «Хĕвел» учрежденире йĕркелекен мероприятисене хастар хутшăнаççĕ. Чылай смотр-конкурсра та ушкăн пĕрре мар мала тухнă, стенана илем кÿрекен тав хучĕсем те çакнах çирĕплетеççĕ. Вĕсен ертÿçи те тĕрлĕ наградăна тивĕçнĕ, 2013 çулта районти вĕренÿпе çамрăксен политикин пайĕ Елена Геннадьевнăна вĕрентÿ ĕçĕнче тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Хисеп хучĕпе чысланă.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

Тĕрĕслев

ТСЖ председательне штрафланă

Шупашкарти Калинин районĕн прокуратуринчен граждансем пулăшу ыйтрĕç – «Веста-30» ТСЖ Гагарин урамĕнчи 30/1 çурта пăхса тăнă чух саккуна пăсни пирки пĕлтерчĕç. Тĕрĕслев çынсен кăмăлсăрлăхĕ сăлтавсăр пулманнине çирĕплетрĕ.

Патшалăх çурт-йĕр инспекцийĕн тата МЧС специалисчĕсене явăçтарса тĕрĕслев иртнернĕ май çуртăн пурте усă куракан вырăнĕсенче тĕрлĕ ăпăр-тапăр пайтаххине палăртнă – хваттерсенче «ытлашши» пулнă сĕтел-пукантан пуçласа пахча-çимĕç упрамалли ешчĕксем таранах. Çурт çумĕнчи территори те тирпейсĕр, лампочкăсем хÿтлĕх плафонĕсĕр... Пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене те уяман.

Тĕрĕслев кăтартăвĕсене тĕпе хурса ТСЖ председателĕ тĕлĕшпе административлă правăна пăсни çинчен калакан ĕç пуçарнă, çитменлĕхсене пĕтермешкĕн представлени çырнă. Çакăн усси пур – çуртра йĕрке тунă. Паллах, ТСЖ председательне яваплăхсăр хăварман – 4 пин тенкĕлĕх штрафланă.

А.ТОЛСТОВ,
Шупашкарти Калинин районĕн прокурорĕ.

Паян «Сывлăх» хаçатăн çĕнĕ номерĕ пичетленсе тухрĕ

- Папка, хупă пухмалла.
- Юн пусăмĕ ÿссен.
- Щит евĕрлĕ пар валли.
- Хăлха шăтăкĕ кĕçĕтсен.
- Чăпăр – тĕлĕнмелле курăк.
- Ÿсен-тăран вăррипе те сипленеççĕ.
- Çу уйăхĕнчи çулçă.

Кивĕ сăн ÿкерчĕк

Вĕсем вутпа çулăм витĕр тухнă

Йĕпреç тăрăхĕнчи Хыркасси ялĕнче çуралса ÿснĕ, чылайранпа республикăн тĕп хулинче пурăнакан И.Т.Петров тăван района килсен «Хыпар» хаçатăн вырăнти корпунктне кĕмесĕр каялла кайнине ас тумастăп эпĕ. Иван Тимофеевич – иртнĕ ĕмĕрĕн 30-40-мĕш çулĕсенче Совет Союзĕнчи ялти спортсменсен хушшинче пĕрре кăна мар çĕр-шыв чемпионĕ пулнă Тимофей Петровăн вăталăх ывăлĕ. Вăл мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччченех чукун çул транспортĕнче тăрăшнă. Халĕ те кĕрĕк арки йăваласа лармасть: производство пĕрлешĕвĕнче мастерта тăрăшать. Пушă вăхăт тупăнсан архивра аваллăх документчĕсене тишкерет. Тавра пĕлÿçĕсене паян Петровсен йăх-ăрачĕ Тăван çĕр-шыва тăшманран хÿтĕлеме мĕнлерех хутшăнни канăç памасть иккен. Иван Тимофеевич манăн ĕç сĕтелĕ çине пĕр сăн ÿкерчĕк кăларса хучĕ те пикенсех унăн историйĕпе паллаштарма тытăнчĕ. «Ку сăн ÿкерчĕкре манăн аннен пиччĕшĕсем сăнарланнă», – терĕ вăл. Тимофейпа Иван Андреевсем – Йĕпреçрен 1 çухрăмра кăна вырнаçнă Пĕчĕк Патăрьелтен. Пиччĕшĕпе шăллĕне пĕр вăхăтра, 1915 çулхи кăрлач варринче патша çарне кайма ят тухнă, вĕсем иккĕшĕ те Тĕнчен пĕрремĕш вăрçине хутшăннă. «Ара, шăп та лăп çав çул, çитменнине тата çав уйăхрах пулас Чăваш халăх поэтне, Пысăк Упакассинче кун çути курнă Çемен Васильева /Çемен Элкере/ та салтак шинелĕ тăхăнтартнă-çке, – Иван Тимофеевича пÿлсех сăмах хушрăм эпĕ. – Кун пирки вăл кайран «Вутпа çулăм витĕр» романра питĕ уçăмлăн çырса кăтартнă. Çемен Элкер çуралнăранпа – 120 тата Тĕнчен пĕрремĕш вăрçи пуçланнăранпа 100 çул çитнине паллă тума хатĕрленнĕ май пире сăн ÿкерчĕк пĕр ĕмĕр каяллахи пулăмсене куç умне кăларма пулăшĕ.

«Çемен Элкере ăнсăртран аса илмерĕç, – Иван Тимофеевичăн сăн-питне ăшă кулă иленчĕ. – Пĕлетĕр-и, пĕр тăван Андреевсем те Пысăк Упакасси çамрăкĕпе пĕрлех патша çарне ăсаннă, вĕсене Йĕпреç урлă пуйăспа кăнтăралла илсе кайнă. «Малтан пире Пенза кĕпĕрнинчи Мокшан хулине /халĕ Мокшанск хули/ илсе кайрĕç. Мокшанра пĕр казарма çеç. Унта та туллиех тыткăна лекнĕ австриецсем пурăнаççĕ. Çавна пула пире хула мещенĕсем патне вырнаçтарчĕç. Пин çуртлă уес хули, малтанах салтаксемпе тулса ларнăскер, эпир пырсан пушшех те тăвăрланса çитрĕ», – вулатпăр чăваш литературин ылтăн çÿлĕкĕ çинче выртма тивĕçлĕ хайлавăн малтанхи страницинчех.

● *Пĕр тăван Тимофейпа Иван Андреевсем.*

1915 çулхи ака уйăхĕн малтанхи кунĕсенче çамрăксене вăрçă ĕçне хăнăхтарнă, çав шутра Тимофейпа Иван Андреевсене те Мокшанран фронта ăсатнă. Тимĕр шапа уттинчен кăшт хăвăртрах чупакан пуйăс тепĕр икĕ эрнерен Львов хулине илсе çитернĕ вĕсене. Каллех «Вутпа çулăм витĕр» кĕнекери йĕркесене илсе кăтартма тивет: «Львовран тухса сакăр вун çухрăм пуйăспа кайрăмăр. Кашни вакуна утмăл-çитмĕлшер çын лартса тултарнипе пирĕнтен çуррине яхăн ура çинчех тăрса пыраççĕ...

Пуйăс çинчен ансан Карпат сăрчĕсен хушшинелле çурран утрăмăр. Умлăн та хыçлăн темиçе батальон çар, тăватшар çынлă ретсемпе харăссăн утса тусанлă çула мăкăрлантарать...»

Карпат тăвĕсен çывăхĕнче пирĕн ентешсен çулĕсем уйрăлнă: Семен Васильева Литва полкĕн 13-мĕш ротине хăварнă, пĕр тăван Андреевсене Волынь полкĕн 7-мĕш ротинче çапăçма шăпа тухнă. Пысăк Упакасси çамрăкĕ, чăваш литературине «Элкер» хушма ятпа кĕрсе юлнă Семен Васильев 1915 çулхи çу уйăхĕн пуçламăшĕнчех йывăр аманса тыткăна лекнине паян кашни вулаканах лайăх пĕлет. Тимофейпа Иван Андреевсене тăван çĕртен чылай аякра чухне те турри хĕрхеннĕ курăнать. Вĕсем Сан, Дунайпа Тисса юхан шывĕсем урлă та тĕрĕс-тĕкелех каçнă, Австрипе Венгри тата Германи салтакĕсем вăйлăн персе тăнă лару-тăрура та пуç çухатман. Чăваш каччисем тăван киле тĕрĕс-тĕкелех çаврăнса çитнĕ тĕле Раççейре Октябрь революцийĕ пулса иртнĕ, ялсенче чухăнсен комитечĕсем йĕркеленнĕ.

Фронтран таврăнма вăхăт çитсе пынăçемĕн пĕр тăвансем Польша çĕрĕ çинчи Люблин кĕпĕрнине кĕрекен Ивангород хулинчи Яков Варман еврей тытса тăнă сăн ÿкерÿ çуртне кĕнĕ. «Темиçе çула тăсăлнă вăрçăра пачах аманман-сусăрланман вырăс паттăрĕсене тÿлевсĕрех сăн ÿкерчĕк туса паратăп», – тенĕ те вашават фотограф, объективне чăваш салтакĕсем çине тĕлленĕ...

Пĕр ĕмĕре яхăн каялла тунă сăн ÿкерчĕке Петровсен çемйи халĕччченех тирпейлĕн упранă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче вĕсен кил-çурчĕ пушарта тĕппипех çуннă, анчах Иван Тимофеевич çемьешĕн чи хаклă документсен пуххине çăлса хăварма пултарнă.

Сăн ÿкерчĕкри çынсен кун-çулĕ тахçанах вĕçленнĕ ĕнтĕ. Пĕчĕк Патăрьелте вĕсене ас тăвакан юлманпа пĕрех. Тимофей Андреевăн мăнукĕ Валя пурăнать-ха, анчах вăл аслашшĕ çинчен нимĕн те каласа параймарĕ. Ашшĕ, Герман Тимофеевич, çут тĕнчерен уйрăлни те чылай пулать.

Патша çарĕнче çапăçнă Тимушăн аслă пиччĕшĕ Иван тăван ялтан иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсенчех тухса кайнă-мĕн. Пĕчĕк Патăрьелти чи ватă çынсенчен пĕри – Геннадий Яковлев ветеран каланă тăрăх – Иван Андреев мĕн виличченех Камчаткăра пурăннă.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru реклама пĕлтерÿ Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ.

ОБЪЯВЛЕНИЕ
О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТЫХ КОНКУРЕНТНЫХ ПРОЦЕДУР ЗАКУПОК В 2014 ГОДУ
Уважаемые господа!

Заказчик - ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (428020, Чувашская Республика, г.Чебоксары, ул.Гладкова, д.13А), являющийся организатором конкурентных процедур, настоящим объявляет о начале открытых закупочных процедур и приглашает юридических и физических лиц к участию в открытом аукционе ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (лот №76-ХОЗ-2014-ЧЭСК), способных на законных основаниях выполнить объявленный объем работ и представить свои предложения для заключения договора поставки хозяйственных товаров (ТМЦ (отвертки, сверла, индикаторы, герметики, адаптеры, моющие средства и т.п.) для нужд ОАО "Чувашская энергосбытовая компания".

Официальные публикации документов, объявляющих о начале открытых закупочных процедур, осуществляются на официальном сайте http://www.zakupki.gov.ru, закупка проводится *на электронной торговой площадке* B2B-Energo.ru. Подробное описание поставляемой продукции и выполнения работ, условия договора содержатся в аукционной Документации. *Документация бесплатно предоставляется в электронном виде всем заинтересованным Участникам, зарегистрированным в системе B2B-Energo, через электронную торговую площадку* B2B-Energo.ru *по запросу* (копия извещения с документацией дополнительно на сайте ОАО "Чувашская энергосбытовая компания").

ОБЪЯВЛЕНИЕ
О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТЫХ КОНКУРЕНТНЫХ ПРОЦЕДУР ЗАКУПОК В 2014 ГОДУ
Уважаемые господа!

Заказчик - ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (428020, Чувашская Республика, г.Чебоксары, ул.Гладкова, д.13А), являющийся организатором конкурентных процедур, настоящим объявляет о начале открытых закупочных процедур и приглашает юридических лиц к участию в открытом запросе предложений ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (лот №12-ТПиР-2014-ЧЭСК), способных на законных основаниях выполнить объявленный объем работ и представить свои предложения для заключения Договора поставки и установки информационных сервисов для улучшения качества обслуживания клиентов для нужд ОАО "Чувашская энергосбытовая компания".

Официальные публикации документов, объявляющих о начале открытых закупочных процедур, осуществляются на официальном сайте http://www.zakupki.gov.ru, закупка проводится на электронной торговой площадке B2B-Energo.ru. Документация бесплатно предоставляется в электронном виде всем заинтересованным Участникам, зарегистрированным в системе B2B-Energo, через электронную торговую площадку B2B-Energo.ru по запросу (копия извещения с документацией дополнительно на сайте ОАО "Чувашская энергосбытовая компания").

ОБЪЯВЛЕНИЕ
О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТЫХ КОНКУРЕНТНЫХ ПРОЦЕДУР ЗАКУПОК В 2014 ГОДУ
Уважаемые господа!

Заказчик - ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (428020, Чувашская Республика, г.Чебоксары, ул.Гладкова, д.13А), являющийся организатором конкурентных процедур, настоящим объявляет о начале открытых закупочных процедур и приглашает юридических лиц к участию в открытом запросе предложений ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (лот №6-ТПиР-2014-ЧЭСК), способных на законных основаниях выполнить объявленный объем работ и представить свои предложения для заключения Договора поставки автомобиля Mitsubishi Outlander для нужд ОАО "Чувашская энергосбытовая компания".

Официальные публикации документов, объявляющих о начале открытых закупочных процедур, осуществляются на официальном сайте http://www.zakupki.gov.ru, закупка проводится на электронной торговой площадке B2B-Energo.ru. Документация бесплатно предоставляется в электронном виде всем заинтересованным Участникам, зарегистрированным в системе B2B-Energo, через электронную торговую площадку B2B-Energo.ru по запросу (копия извещения с документацией дополнительно на сайте ОАО "Чувашская энергосбытовая компания").

ОБЪЯВЛЕНИЕ
О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТЫХ КОНКУРЕНТНЫХ ПРОЦЕДУР ЗАКУПОК В 2014 ГОДУ
Уважаемые господа!

Заказчик - ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (428020, Чувашская Республика, г.Чебоксары, ул.Гладкова, д.13А), являющийся организатором конкурентных процедур, настоящим объявляет о начале открытых закупочных процедур и приглашает юридических лиц к участию в открытом запросе предложений ОАО "Чувашская энергосбытовая компания" (лот №7-ТПиР-2014-ЧЭСК), способных на законных основаниях выполнить объявленный объем работ и представить свои предложения для заключения Договора поставки автомобилей Renault Duster (в количестве 3-х единиц) для нужд ОАО "Чувашская энергосбытовая компания".

Официальные публикации документов, объявляющих о начале открытых закупочных процедур, осуществляются на официальном сайте http://www.zakupki.gov.ru, закупка проводится на электронной торговой площадке B2B-Energo.ru. Документация бесплатно предоставляется в электронном виде всем заинтересованным Участникам, зарегистрированным в системе B2B-Energo, через электронную торговую площадку B2B-Energo.ru по запросу (копия извещения с документацией дополнительно на сайте ОАО "Чувашская энергосбытовая компания").

АУКЦИОН
по продаже движимого и недвижимого имущества, принадлежащего ОАО "Территориальная генерирующая компания №5"

Предмет аукциона: право приобретения в собственность объектов движимого и недвижимого имущества, принадлежащих **ОАО "ТГК-5",** расположенных по адресам:
428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, Марпосадское шоссе, 4,
428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, Марпосадское шоссе, д.7,
429570, Чувашская Республика, г. Мариинский Посад, ул.1-ая Денисово в том числе:

№ лота	Наименование объектов	Начальная цена, руб.
1	Земельный участок с кадастровым номером 21:01:030302:97, площадью 2618 кв.м	6 929 061,79
	Недействующий железнодорожный путь ЖД-I, протяженностью 540 п. м., расположенный на земельном участке с кадастровым номером 21:01:030302:97, площадью 2618 кв.м.стройплощадки Чебоксарской ТЭЦ-2	
	Земельный участок с кадастровым номером 21:01:030302:374, площадью 4792 кв.м.	
	Бетонное покрытие площадью 3450 кв.м. на земельном участке 4792 кв.м. с кадастровым номером 21:01:030302:374	
	Земельный участок с кадастровым номером 21:01:030302:124, площадью 2194 кв.м.	
	Бетонное покрытие площадью 2194 кв.м. на земельном участке 2194 кв.м. с кадастровым номером21:01:030302:124	
2	Производственно-технологический комплекс "Ветроэлектростанция" Мариинский Посад	736 368,69
3	Имущественный комплекс[1] в составе:	22 089 000,00
	Здание операторской с узлом управления, находящееся на территории Мазутного хоз-ва Чебоксарской ТЭЦ-2 и Пристрой к операторской узла учета и замера светлых нефтепродуктов (продажа при условии строительства ограждения территории)	
	Земельный участок с кадастровым номером 21:01:030206:311, площадью 2591 кв.м.	
	Земельный участок с кадастровым номером 21:01:030206:314, площадью 672 кв.м.	
	Земельный участок с кадастровым номером 21:01:030206:315, площадью 6120 кв.м.	
	Земельный участок с кадастровым номером 21:01:030206:316, площадью 707 кв.м.	

Аукцион состоится 26 мая 2014 г. в 14 ч.00 мин. мск по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 52, кабинет №805 (конференц-зал), 8 этаж.

Прием заявок на участие в аукционе производится по адресу: Чувашская Республика, г.Чебоксары, ул. К. Маркса, 52, кабинет №303, в рабочие дни с 8 ч. 00 мин. до 17 ч. 00 мин. (пятница с 8 ч. 00 мин. до 16 ч. 00 мин.) мск с 21 апреля 2014 г. по 21 мая 2014 г. включительно, контактное лицо: Репина Елена Юрьевна тел./факс: 8(8352) 22-52-94; эл. почта: E.Repina@ies-holding.com

Дополнительная информация о составе реализуемого имущества размещена на сайте www.tgc5.ru, для получения подробных разъяснений следует обратиться к контактному лицу.

[1] Продажа при условии возведения Покупателем ограждения Имущественного комплекса лот №3

ПРОДАЮ

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

172.Гравмассу, керамблок, песок, **щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного использования в долгосрочную аренду сроком на 49 лет:

- с кадастровым номером 21:08:340401:185 площадью 507913 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос., местоположение установлено относительно ориентира в северной части кадастрового квартала 21:08:340401;

- с кадастровым номером 21:08:340401:188 площадью 453219 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос., местоположение установлено относительно ориентира в северо-восточной части кадастрового квартала 21:08:340401.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с.Батырево, пр.Ленина, д.5. Справки по тел.: (83532)6-14-26.

Администрация Чебоксарского района предлагает в аренду сроком на 5 лет земельный участок площадью 0,2810 га с кадастровым номером 21:21:244402:300, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Ишлейское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения), для благоустройства пруда.

Администрация Чебоксарского района извещает о намерении продлить срок аренды на 5 лет земельного участка площадью 0,8164 га с кадастровым номером 21:21:000000:496, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Ишлейское сельское поселение, земельный участок расположен в кадастровых кварталах 21:21:243601 и 21:21:244402 (земли сельскохозяйственного назначения), для рыболовства.

Контактная информация по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, (каб.№6 а).Телефон для справок 8(83540) 2-14-00.

Конкурсная комиссия по проведению торгов (конкурсов, аукционов) по продаже земельных участков, продаже права на заключение договоров аренды земельных участков администрации Шумерлинского района извещает о результатах проведенного 07 апреля 2014 года в 14 час. 00 мин. аукциона открытого по составу участников и форме подачи предложений о цене по адресу: г.Шумерля, ул. Октябрьская, д. 24. Решение о проведении аукциона принято постановлением администрации Шумерлинского района от 20.02.2014 № 82 "Об условиях аукциона".

Предметы аукциона – земельные участки из земель сельскохозяйственного назначения, предназначенные для сельскохозяйственного производства, на которые государственная собственность не разграничена, в следующем:

1.1. имеющие местоположение: Чувашская Республика, Шумерлинский район, Егоркинское сельское поселение: земельный участок общей площадью 6,8 га, кадастровым номером 21:23:060101:187 (лот 1); земельный участок общей площадью 9,79 га, кадастровым номером 21:23:060101:188 (лот 2); земельный участок общей площадью 36,42 га, кадастровым номером 21:23:060101:189 (лот 3); земельный участок общей площадью 5,0 га, кадастровым номером 21:23:060101:190 (лот 4); земельный участок общей площадью 51,33 га, кадастровым номером 21:23:060101:201 (лот 5); земельный участок общей площадью 66,3 га, кадастровым номером 21:23:060101:204 (лот 6); земельный участок общей площадью 7,97 га, кадастровым номером 21:23:060101:213 (лот 7); земельный участок общей площадью 10,88 га, кадастровым номером 21:23:060101:272 (лот 8); земельный участок общей площадью 11,33 га, кадастровым номером 21:23:070102:188 (лот 9);

1.2. имеющий местоположение: Чувашская Республика, Шумерлинский район, Юманайское сельское поселение: земельный участок общей площадью 107,73 га, кадастровым номером 21:23:000000:3971 (лот 10).

Победитель аукциона по лотам с №1 по № 10 включительно - общество с ограниченной ответственностью "КЕННЕТ".

23 апреля зал Чувашской государственной филармонии **начало 18-30**

100-летию со дня рождения выдающегося чувашского композитора и дирижера А.Г.Орлова-Шузьма посвящается

ЗАКРЫТИЕ 90-го КОНЦЕРТНОГО СЕЗОНА

КОНЦЕРТ Чувашского государственного академического ансамбля песни и танца

Справки по тел.: 62-14-83, 62-54-48.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служби Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.П.СТЕПАНОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7512. Заказ 1386.